С(Чув)
К С31
32654чув

Михаил Сениэль



# ИРХИ ЮРĂ

Национальная библиотека ЧР
4-032654

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |



*Михаил Сениэль*

# ИРХИ ЮРӐ



*Сӑвӑсемпе поэмӑсем*

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1990

ББК 84 Чув 7-5
С 31

ПРОВЕРЕНО
29 ю

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Сениэль М. П.**

С 31 Ирхи юрă: Сăвăсемпе поэмăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990.— 151 с.

Ку кĕнекене поэтăн унччен тухнă «Малтанхи юр», «Шкул вальсĕ», «Ан пăшăрхан эс, аннемĕр», «Ытараймин», «Савăнăç куççулĕ», «Çĕр чунĕ» сборникĕсенчи произведенисем тата çĕнĕ сăвă-поэма кĕнĕ.

**ББК 84 Чув 7-5**

**С $\frac{4803710202-080}{М\ 136(03)-90}$ 64—90**

ISBN 5—7670—0339—4

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1990 ç.

# СӐВӐСЕМ



## ПУЛТАРУЛӐХ

Синкерлĕ вăрттăнлăх, саланччĕ!
Халь-халь эс саланассăнах
кĕрлет чĕремĕн вăй-хăвачĕ.
Салан чăл-пар! Часрах, часрах!

Сывлатăп йывăр. Тăвăнатăп.
Çамка — çунать, вутри çатма.
Пĕтеп. Пĕтетĕп. Парăнатăп.
Пултараймастăп тек чăтма.

Чакать чĕремĕн вăй-хăвачĕ.
Чакать кăвар, пуçри кăвар.
...Синкерлĕх ишĕлчĕк хăварчĕ,
эс, вăрттăнлăх, чунна хăвар.

*1965*

## ПĔЧЧЕН ХУРĂН

Вăйлă сивĕ çилсем...
Çап-çамрăк хурăнăн,
çĕр çумнех пĕшкĕнсен,
чунĕ пит хурлăхлă.

Ман тăван, хурăнăм,
тек пĕччен эс пулмăн.
Ав лартаççĕ çынсем
сан пекех хурăнсем.

Юмансем те лартаç
ĕçченсем çак сăрта.
Çитĕнеç йывăççем
сыхлама тырăсем.

Эсĕ те çитĕнĕн,
ӳсĕн те сарăлăн,
хунавсем кăларăн,
ӳсĕн те савăнăн.

*1950*

## МАНĂН ЕМЕТ

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
сăвă çырас,
сăвă çырас килет.

Эпĕ халĕ çамрăк ача çеç-ха.
Ӳссе çитĕп, пулăп ăслă çын.
Хăшĕсем ученăй текелеççĕ.
Итлеместĕп эпĕ.
Ҫалĕçин.

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
поэт пулас,
поэт пулас килет.

*1952*

## ВĂРТТĂН ÇЫРУ

*Тамарăна*

Хĕвел ирпе савса пăхатчĕ.
Хавасчĕ, ирĕкчĕ тĕнче.
Малти куна кĕтсе юхатчĕ
ыр кĕвĕ сăвăç чĕринче.

Ик-виçĕ çамрăк çарапуçăн
пырать йăтса гитарине.
Октябĕре кĕтсе тăруçăн
спектакль лартрĕç каçхине.

Ăна-кăна епле астумăн:
шăпах вунпиллĕк тултарса.
Пĕрремĕш çамрăк юрату ман
çут кĕмĕл шыв пекех таса.

Нумай киревсĕрлĕх çуратнă
суя çын ултавне шанни.
Элек тени пуçа çухатнă,
вĕчĕрхенсе элеклени.

Ултав сăмахсене ан шанăр.
Ултавçă шелсĕр те хаяр.
Ултав-суя тымарĕ шантăр —
тĕпрен кăклар та ывăтар!

Сăвва, тен, вăрăм тăсса кайрăм?
Тен, вăхăт çитнĕ вĕçлеме?
Малтан, ак, эп çырма пуçларăм,
сиртен ыйтап ответлеме...

*1955*

## АКСУ ШКУЛНЕ

Çак шкул хавассăн пĕрлештерчĕ
пире пĕр туслă çемьене,
ыр сунчĕ, уçрĕ алăкне —
пĕлменнине нумай пĕлтерчĕ.

Виç çул, ак, иртрĕ сисĕнмесĕр
çак пĕртăван пек ушкăнра
хĕрсе вĕреннĕ вăхăтра
кая тăрса юлас темесĕр.

Нумай та тĕрлĕ çын пур ман
çулсем иртсессĕн асăнма.

Кам чăтĕ-ха асне илмесĕр
Кирилловнáн таса сăнне,
хаваслă, ырă куллине.
Вĕрентекен, ыр ятлă эсĕр.

Иван Степанч та — пирĕнте,
Пуçран вăл тухмĕ ĕмĕрте.

Никам манмашкăн шутламасть-тĕр
Рыжкован янкăс сассине,
вăл «икс», «игрек» тенине.
Ăçтан çав камите çын мантăр.

Чунпа кунтах юлатпăр эпĕр,
кайсан та урăх енсене.
Вутпа вĕрен чĕресене
эпир тăван çĕре пиллетпĕр!

*1956*

## ИРХИ ЮРĂ

Тухăç ылтăн сапăннă,
вут пек ялкăшать.
Эс халех Светланăна,
амăш, ан вăрат.

Туслăх пирĕн пĕлĕтсĕр,
çук кӳрентерӳ.
Мĕн курать, эп пĕлĕттĕм,
тĕлĕкре хĕрӳ?

Çывăртăр, ан илттĕр вăл
пуйăс чĕннине.
Сĕнк пулса çеç илтĕм эп,
тухрăм çул çине.

Эп инçе пуçтараннă,
кулянса тăрап...
Эс халех Светланăна,
амăш, ан вăрат.

*1957*

## ДОЯРКА

Тӗл пулма васкас-ха терӗм,
вӑрттӑн вырӑна ир ҫитрӗм.
Час-ши, час-ши, ҫывӑхскерӗм,
эс килен кунта, савниҫӗм?

Ҫавӑрать юра кас ҫилӗ
вальсри пек, сӑпайлӑн, ҫепӗҫ.
Ҫӗн клуба — хӗрпе каччийӗ —
кайӑпӑр тӗлпулнӑҫемӗн.

Ташлӑпӑр вара пит чаплӑ.
Эс те ташӑ юратан вӗт?
Пуҫӑм ҫаврӑнсан, эп чарӑп
кӑшт сана, кулса ытарлӑн.

Санӑн куҫунта курас теп
ӑшӑ туйӑм, ҫутӑ ӗмӗт.
Санпала пӗрле пулас теп,
савнӑ ҫыннӑм, эпӗ ӗмӗр.

Ҫавӑрать юра кас ҫилӗ.
Эс студент, поэт эс, тусӑм.
Иртерех доярка ҫитрӗ —
тепринче чӗнмесӗр тухмӑп...

*1958*

## ПĂРУ ПАХАКАНА

Çитер, ĕçтер, лăпка, пуçран шăл,
шăнтса ан яр, чиртен сипле...
Куççуль те, савăнăç та саншăн
кун пек ĕçре вăл тем чухлех.

Пăру тени çемçешкерех çав,
ачаш — алри ача пекех.
«Ан кай пăхма»,— сивлет элекçĕ,
анчах эс килтĕн пурпĕрех.

Хĕрӳллĕ — тăрăшу вучахĕ,
çунан вутти — тӳр кăмăлу.
Чараймĕ пурăнăç тумхахĕ,
телейлĕн йăлкăшĕ куллу.

Парăнмасассăн çеç ӳсетпĕр.
Ĕçе саватăн кăмăлтан.
Малта мĕнле шăпа кĕтсен те,
хальхи шăпу ху аллунта.

*1959*

## ЮР ТАСАЛĂХĔ

Эй, юр тасалăхĕ, пирвайхи юр тасалăхĕ,
мĕн чул асап кӳретĕн эс мана!
Шур тĕс çапать çап-çамрăк сăнăма.
Эй, çут тасалăхăн ытарайми асамлăхĕ,
эс сиплĕх мар, эс — çĕçĕ чунăма.

Мĕн чухлĕ тăрăшрăм санăнни пек тасалăхшăн,
анчах çĕнтереймерĕм хама хам.
Хама эп упраймарăм халăхшăн,
çав майăн улталарăм халăха.

Ну, кам-ха ăшталантăр, кам ăнлантăр...
Ҫашни чупать хăй тĕрлĕ нушапа.
Ҫама черкке те çук, кама кăмкан пек алтăр.
Ниме тăман çыннах реххет шăпа.

Ах, çав пĕтсе пĕте пĕлмен ниме тăманлăх.
Хăй пур ялан, пире çеç пĕтерет.
Пирвайхи юр та хăш чухне тăманлă,
тăманĕ, хыт асса, тусанпала хуралнă.
Ҫав юр, атьсем, мĕне-ши пĕлтерет?

*1961*

## СОЛЬВЕЙГ

Çын çине малтанхи хут эп тухрăм.
Çуркунне! Ăçта çитсен те савăк!
Ăшă куç çути те, ăш салам та пухрăм.
Сольвейг мар пулсассăн та, эп Сольвейг.

Пычĕ тăчĕ ман çума пĕр каччă.
Вăл кулмарĕ, эпĕ йăл кулсан та.
Сăнăм çулăмччĕ ман, юн кăварччĕ.
Сольвейг эпĕ, Сольвейг мар пулсан та.

Кăварлатрĕ те çухалчĕ... Иртрĕ ĕмĕр.
Мĕн чарать сана, тăванăм, кам ямарĕ?
Тĕлĕкре кăна текех пĕрле çӳрерĕмĕр,—
култăм эпĕ, вăй вылярăм, эс кулмарăн.

Пурпĕрех кĕтетĕп те шанатăп.
Эс килен-ха, çитеймен — çул вăрăм...
Хĕл тулта. Шăнатăп эп, шăнатăп.
Те тăман çӳрет тулта, те вăрă.

*1962*

## СУЯЛАХ

Кущран пăхса, чуна мĕн чул тĕпчерĕн эс.
Синкерлĕн çатăрлать ăна сăнун хĕрӳ асамĕ.
Парăнас мар пирки манра пырать экзамен.
Епле çĕнес сана — епле вĕçерĕнес?

Çитетпĕр эсĕ чĕннипе Казанка çыранне.
Хыçра шур кремль, çерем — тин шăтнă курăк.
Чĕремçĕм тем сисет. Мĕскер? Пĕлместĕп. Курăп.
Тăнлатăп эс çуркуннене епле юратнине.

«Пытанакан хĕвел...— тенисене илтетĕп,—
тĕтрелĕхре шăпăлтатан хумсем... инçет...»
«Юрас шутпа калатăн-çке, суятăн,— тетĕп
эп ăшăмра,— суян куç умĕнчех».

Сив кăмăлпа, чееленсе пуплерĕн
этемĕн тупсăмĕ çинчен, чăн тĕрĕслĕх çинчен,
пĕр нимĕн ытлашши кала пĕлмерĕн
çавнах пĕркун сана эп хам каланинчен.

Кущран пăха-пăха, чуна мĕн чул тĕпчерĕн эс.
Ма пытарас, ăна аван эс пĕлтĕн.
Итлетĕп сăмахна, тăнланăн пĕлтĕр,—
пуш-пушшăн илтĕнет... Епле вĕçерĕнес?

*1963*

## ЮТРА

Кăсăк мар кунта нимскер те
тĕлĕкпе пурнакана.
Кунта мар чунпа çӳретĕп.
Эп кунта хăна кăна.

Никампа та хутшăнмарăм,
ĕненмерĕм никама.
Ай, хăçан кунтан эп тарăп
нусрăнмасăр пурăнма.

Миçе çул утма памасăр
ура хутăм хама хам,
тĕмсĕлтĕм тăван сăмахсăр,
курăнмарăм халăха.

Çитсенех эп тăвăл çĕклĕп,
вăратса пур вăй-хала.
Эп кунта чăн мар, эп тĕлĕк.
Эп кунта хăна, хăна.

Тахçанах пырса çитесшĕн,
йывăр шухăш хăратать:
хуçăлсан, çĕнеймесессĕн,
пăр çапсан вăй-хăвата?

Ӳн чухне ăçта эп кайăп? —
шанчăк пĕтнĕ, çул чĕнмест,—
юрăсăр, çунатсăр кайăк,
ӳкĕп-çапăнăп çĕр çумне

*1965*

## КАҪХИ ҪИЛСЕМ

Каҫхи ҫилсен юрри, шăв-шавĕ...
Шăв-шав лăпланнă шăп самант,
сире итленĕ май пуҫлам-и
шухăшлама, анаслама.

Поэзи хапхинчен кĕрес теп —
уҫҫи ăҫта, кам аллинче?
Эп чун тĕпнех анса килес теп —
ăҫта, мĕнле ҫав тĕп, миҫе?

Хапхинчен мар, алăкĕнчен те
кĕртесшĕн пулмасан, мĕнех,
пире юрать — кантăкĕнчен те:
хĕвел кĕрет тĕнĕренех.

Тĕнне, паллах, кăшт пăкăлаҫҫĕ.
Пулин, тĕксе уҫма пулать.
Манран чылайăшĕ кулаҫҫĕ,
кулаканран турри кулать.

Эп халь кĕтӳҫ, айван курнатăп,
эсир те — темех мар, кичем...
Эп — итлекен — йăваш кăна та,
юрлаканни — кăра ҫилсем.

*1966*

## ЧĂНЛĂХ ВУЧĔ

Чи тĕрĕсси тăван анне...
Ачалăхра çапла вăл пулчĕ.
Тĕп чăнлăхăн чакмарĕ вучĕ,
çунтарчĕ, туртрĕ хăй еннех.

Ачалăхра ĕненнисем
яш кунсене çутатаймарĕç.
Яш кунсенче янранисем
çамрăклăхра янăраймарĕç.

Пăлханнипе чăл-чал пăхса,
нумайăшне эп ăнланмарăм.
Чăн çын пулма тупа туса,
хам сăмахах хăш чух тытмарăм.

Çапах та, ун чухнех, час-час
çын тупсăмне туйса çып-çывăх,
кураттăмччĕ, айван ача:
тĕнчен тем чул тискерлĕх, çылăх.

Хаярлăхра çитĕннисем
суя мĕн иккенне те пĕлнĕ.
Мĕн чул этем, элек тўссе,
мĕн чул герой шар курнă, пĕтнĕ.

Тиран ялан тронра пĕччен,
анчах хўри — хура та вăрăм,
анчах хўри — ясар та вăрă,
çăхавçă, сўтĕк, юнĕçен.

Хăватлă Ленин, сан ятпа
лап витĕнсе, вĕсем сут турĕç.
Сан гвардине те çав майпах
хупларĕ çил, тăхлан та хурăç.

Тĕнче тăмасть, паллах, пĕр пек.
Çитсе кĕрлерĕ çĕнĕ тапхăр.
Çав йăх-яха йăлт, тĕппипе
хушшăмăртан сирсе пăрахтăр.

Суя тус тăшманран та ирсĕр:
варлать, çыртать куçран пăхса,
çапах та Ленин, ленинизм
тĕп чăнлăх вучĕ пек таса.

Çĕр тĕнĕлĕ вăл пирĕн Ленин,
унра çеç пирĕн чăн тĕрек,
ăна çеç эп хальччен итленĕ,
итлетĕп, итлĕп ĕмĕрех!

*1968*

32654 гув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

## МАН ПЕТЕМ ПУРӐНӐҪ

Шӑп ҫирӗм ҫул эп ҫурални.
Ман пӗтӗм пурӑнӑҫ — ҫынсем патне ҫул шырани.
Эй, ҫут тӗнче, эп ҫав ҫула тупмарӑм,
тупсассӑн та тупман тесе шутларӑм.

Ача чухне кӑна, ача чухне,
ман пурччӗ ӑрӑскал: атте-анне.
Ман пурччӗ юлташсем, туссем те пурччӗ.
Ӑҫта вӗсем, ӑҫта? Ӑҫта ачалӑх юлчӗ?

Хӑйматлӑх аппасем, хӑйматлӑх пиччесем!
Халь те умрах, умрах сӑн-питӗрсем,
анчах та хӑвӑр ҫук. Ӑҫта кайса ҫухалтӑр?
Ӑҫта, кам тӗлӗнче ваш! варкӑшать ҫунатӑр?

Ма упраймарӑм-ши ача чунне?
Ма юраймарӑм ҫывӑх ҫынсене?
Мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫынсем патне утатӑп,
мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫын шыраса супатӑп...

Шӑп вӑтӑр ҫул эп ҫурални.
Ман пӗтӗм пурӑнӑҫ — ҫынсем патне ҫул шырани.
Эй, ҫут тӗнче, эп ҫав ҫула тупмарӑм,
тупсассӑн та тупман тесе шутларӑм.

Яш вӑхӑтра, чӑнах, яш вӑхӑтра
пӳ яштакаччӗ, ҫырӑччӗ кӑтра,
хӗрачасем хӗрӳленсе ҫыру ҫыратчӗҫ,
пӗр-ик хутчен сӑмса тутри те парчӗҫ.

Эп хам та пулнӑ Байрон пек вӗри.
Мана саватчӗ кӳршӗ Варвари.
Эпир ун чух Ромеопа Джульетта пекчӗ.
Чуна ҫӗклетчӗ юрату сипечӗ.

Ҫилсем вӗрсен, ҫанталӑк улшӑнать.
Ик тус кала пуҫларӗҫ: «пуҫана».
Ҫакна илтсе, нумай-нумай кулянтӑм,
тус-юссене те, савние те мантӑм.

Тек чӑрманмастӑп амурла ӗҫпе.
Тус пултӑр ҫын идея тӗлӗшпе.
Мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫынсем патне утатӑп,
мӗн ӗмӗр тӑршшӗпе ҫын шыраса супатӑп.

Сахал-и тӗнчере пӗр шухӑшлӑ ҫынсем?
Чылай — ҫут тӗнчере пӗр пек шутлакансем!
Эпир те, савнӑ тус, пӗр пек хӗрӳ политик,
пӗр пек хӗрӳ поэт, философ-аналитик.

Санпа ялан сӑмахӑм килӗшет.
Хӑш чух кӑна хурлатӑп, тиркешеп,—
хӑш чух кӑна сана ҫӗнрен унасшӑн,
хам пек макрашакан, нӑйлатакан тӑвасшӑн.

Эс ан итле, сӑввӑма ҫеҫ итле.
Ман пӗтӗм пурӑнӑҫ — ҫул шырани ҫынсем патне.
Идеалист эп, ҫав ҫула тупмарӑм,
тупсассӑн та тупман тесе шутларӑм.

*1969*

## АХ, ЭСĔ, ПУÇĂМ...

Пĕр çул пĕр кун пек иртсе кайрĕ.
Иртет пуль ĕмĕр те çапла.
Епле эс çамрăкчĕ. Ак халĕ,
тăванăм, халĕ — шап-шакла.

Çеçенхирти сап-сар кăлканĕ
сайралчĕ пуль ваш-ваш! çилпе.
Сан лăс çӳçӳн кăтрам-кăтрамĕ
мĕнпе çаралчĕ-ши, мĕнпе?

Ма сухалу та чăпарланчĕ,
тăнлавусем те кăн-кăвак?
Мĕн-ма пиртен хĕрсем тараççĕ?
Ват карчăксем те тарĕç ак!

Шутлап та, пурте тĕрĕсех вĕт.
Çын ырласса текех эс ан кĕт.
Çапах, чалланнă ик хусах,
хĕрсем тиркетпĕр-ха, çапах.

Çапах курнасшăн-ха çап-çамрăк,
турнепс килĕшмест, пар çарăк.
Çакна мĕнле ăнланмалла?
Авланмалла. Авлан-мал-ла!

Эс авлансассăн, юлташу та,
ну эп, сана ăс паракан,
кăшт ăслăланăп... пур-ха шутăм...
хăш чух вăл сан та пулакан.

Эппин, ĕçер-ха юратушăн,
халь çеç телейшĕн ĕçнĕ пек.
Эппин, ĕçер-ха савнă тусшăн,
чăнк-чанк! тăвар черккесемпе.

Тулли курка пек пултăр пурнăç,
ялтратăр савнăç куç тулли.
Ах, эсĕ, пуçăм, шухă пуçăм,
ах, эсĕ, ал, поэт алли!

*1970*

## ЮРАТУПА ИРĔКЛĔХ

(сонет кăшăлĕ)

1

Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх! Эсир пурнатăр
пиншер çулсем этем ĕмĕтĕнче,
алла кĕрес пекех умра курнатăр,
тытма тăрсан — çитме май çук инçе.

Эп çамрăкчĕ. Пурăнăçа пĕлмесĕр,
ăна ирттертĕм пит çăмăлттайла —
чечек суйланăн хĕр суйла-суйла,
ытах çунмасăр, лăпкăн, кĕлленмесĕр.

Анчах... хăш чух... пулаттăм шĕл-кăвар.
Қапла ирĕклĕскер, чунпа эп читлĕхреччĕ;
чуна çиетчĕ вут — хăруш, хаяр;

сасартăк хыпнăскер, сасартăках сӳнетчĕ.
Хулран каллех яватчĕ ял майри
çак тĕнчере никам уйăрайми.

2

Çак тĕнчере никам уйăрайми
ăна хăйне савма пултараймарăм.
Текех качча тухасшăн юрлани
мана шухăшлаттарчĕ тарăн.

Ҫилӗшем ҫех, паян тесен паян,
саватӑп-и, савмастӑп-и, тухать вӑл.
«Мӗн—Ирӗклӗх? Мӗн—Юрату? Мӗн хаклӑ?—
ыйтаттӑм эпӗ.— Ма ӑсран каян?

Ма тыткӑна васкатӑн уямасӑр?
Епле сана юратӑп юратмасӑр?
Ирӗклӗхне, тӑванӑм, тӗп ан ту.

Чӑн Ирӗклӗх —ик енлӗ Юрату.
Чӑн Ирӗклӗх ҫынна телей кӑтарттӑр,
чунри хӗрӳлӗхе, унти ҫутта упратӑр».

## 3

Чунри хӗрӳлӗхе, унти ҫутта упратӑр
ҫынсем валли, ачамӑрсем валли.
Ирӗклӗскер, темле мулпа тупра та
тупать пуласлӑха юратнӑ ӗҫ алли.

Ӑста пулма хистет ҫӗкленнӗ кӑмӑл.
Хавасланса ҫӳретӗн эс унпа.
Ҫуҫа, пите иленнӗ кулӑпа
тус-юлташа савӑнтармашкӑн ҫӑмӑл.

Хитре пулма хитре иккен тата:
ӑш сӑмахпа чӗнен те, тупата,
хитрелӗх ҫук ҫыннах хитре тесе хураҫҫӗ;

хитрелӗхе чун ӑшшинче кураҫҫӗ,
чуна ҫӗклеҫҫӗ хирӗҫли, майли,
куллен хӑват кӳрсе ытарайми.

### 4

Куллен хăват кўрсе ытарайми,
пуçра çĕн шухăшсем амаланаççĕ.
Чи пысăк шанчăк Çĕршĕн — пуç мими,
пуç мимиех чĕр мăшкăл аппарачĕ.

Мĕнле чĕреллĕ çыннăн пуçĕнчи
мĕнле миме çут тĕнчепе тăванлă?
Юратакан чĕре! Ирĕклĕхпе туптаннă
чĕре! Ильич кăкăрĕнчи!

Ленинецсем Çĕре çăлса хăварĕç,
ялан-ялан çўлтен çўле хăпарĕç —
ăс-кăмăл тўпине те космоса.

Ахальтен мар чунтан хавхаланса:
«Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх!» — теетпĕр,
вĕсем çĕкленипе çўлтен çўле вĕçетпĕр.

### 5

Вĕсем çĕкленипе çўлтен çўле вĕçетпĕр.
Фарисейсем, эсир пуррипе мар
ыр гений пур! Эсир юна ĕçетĕр
йăл-йăл кулса, шўт шўтлесе пĕрмай.

Хăравçăсем! Ялан çыртатăр вăрттăн,
фараонсен çуланчăк йыттисем!
Панкăрута тухсан фараонсем,
çĕннисене шăршлатăр хăвăрттăн.

Ултавлăн парăнатăр вĕсене.
Шалу пырать... ят-сумлăх ўсĕнет...
Мĕн виличчен çапла иудăлла пурнатăр.

Хăш чух патша пекки, хăш чух оратор,
хăш чух пиит... Шавлатăр мухтанса:
«Тĕллев — тивлетлĕ, шухăшсем — таса».

6

«Тĕллев — тивлетлĕ, шухăшсем — таса»,—
теме, çаплах пулсассăн та, тăванăм,
хал çитмĕ пирĕн, хытă вăтанса,
эп те калаймăп, эсĕ те калаймăн.

Çав туйăма усрасчĕ чĕрере
куçăхтармасăр та сÿнме памасăр;
пĕтме пÿрсессĕн — хÿтĕлесчĕ харсăр,
çĕнесчĕ те усрасчĕ çĕнĕрен.

Тус-йышшăн тăрăшни — пĕртен-пĕр тупсăм.
Яла-йыша кÿресчĕ усă, тусăм,
ялйыш хăвармĕ хăй те пăрахса.

Тен, урăх шутлă эс, тĕллев те урăх сан?
Тен, çĕнĕ çул, тĕрĕсрехне, эс тупрăн,
пурăнăçа савса та юратса?

7

Пурăнăçа савса та юратса,
савнисене пурăнăç пек саватпăр.
Çулу, çĕнни пулсан та, йăнăш сан,
вăл тĕрĕс мар, тивлетсĕр те сăвапсăр.

Савни, анне пекех, чи çывăх çын.
Аннесĕр чунĕ те, илемĕ те çук килĕн.
Пĕр хăвшăн пурăнни — пушхир, пĕчченлĕх, вилĕм.
Атте-анне, савни, тус-йыш — ак чун уççи!

Пĕр хăйшĕн хыпăнса, çынна тивмен субъект та —
киревсĕрскер; чăнне калас-тăк — йытă:
«Эп пурăнам,— тет вăл,— ытти çăва патне».

Ун пек епле пăхан çынсем çине? —
Юратнăран шанатпăр, хисеплетпĕр,
Ирĕклĕхе çăл шывĕ пек ĕçетпĕр.

## 8

Ирĕклĕхе çăл шывĕ пек ĕçетпĕр,
кислота пек çиместпĕр пĕр-пĕрне,
канатпăр, вĕренетпĕр, ĕç ĕçлетпĕр,
умран ямастпăр пурнăç хĕвелне.

Çутат, çутат, эй, пурăнăç хĕвелĕ!
Ялтра та çиç, эй, ирĕклĕ тĕнче.
Тăван çĕршывăмăр çак аслă çĕр çинче
епле янравлă та епле илемлĕ!

Ах, юрататăп эп çĕршывăма,
пĕлместĕп урăх нимĕн калама,
ним каламасăр ĕмĕр юрататăп,

чыслатăп сăвăпа та, юрăпа та.
Каç-каç утатăп пĕр пике патне.
Савни, тăванăм, ан пытар питне.

## 9

Савни, тăванăм, ан пытар питне.
Каç-каç эп сан патна вут кăларса васкатăп.
Манса çут тĕнчене, ĕçе, каç апатне,
ӳке-ӳке чупатăп — савăк кадр!

Чечек эс. Эпӗ, ху пӗлен,— тӗкӗлтура.
Хӗвел эс. Эпӗ спутник. Маҥ орбита
хӑй еверлӗ, анчах та шиклӗ питӗ:
ялан — хӗвел тавра, хӗвел тавра.

Ҫапла ҫав — кадр, савӑк, ырӑ кадр.
Хӑш та пӗри ӑна татасшӑн. Юрӗ. Таттӑр.
Татайӗ-ши хӗвел пӗтмесӗрех? Тепле...

Ан тив, эп курӑнатӑп камитле,
пулин, суймасӑр, шӑппӑн юрататӑп.
Чӑнах калатӑп, шухӑшлӑн итле.

## 10

Чӑнах калатӑп, шухӑшлӑн итле,
чеен ан кул-ха, юратап вилеслӗн.
Чечек, чечек! Ҫиҫет-ҫунать епле!
Сӗрлетӗп те шавлатӑп. Ӑслӑ: кӳренмест вӑл.

Выляннӑ майӑн улшӑнать тӗпрен.
Вӑл чечек мар — хӗвел. Темле шута вӑл путнӑ:
«Пачах эп хӗвел мар,— тет,— эпӗ спутник.
Пире хуплаймӗ тӑвӑл та тӗтре;

ҫапах та пӑрӑнар-ха, анне курӗ;
сӑпайлах мар та ҫакӑ аллегори:
пӗрле-ҫке ӗмӗр — спутник те хӗвел...

Ҫавна та ӑнланмаҫҫӗ... питӗ шел...
Чипер пырсам-ха, хулӑмран ан усӑн.
Мӗсҫер ку: Юрату-и, Ирӗклӗх-и, тусӑм?»

## 11

«Ку Юрату та, Ирĕклĕх те, тусăм!» —
тесе калатăп çирĕппĕн сана.
Тăхта, ан ӳпкелеш-ха ашкăнушăн,
тăнла кăштах, тăванăм, усала.

Ӳпкелешсе чулран сар çу тăваймăн,—
ак çĕн каларăш, пит кирлех пулсан.
Этеммине ху пеккине тупсан,
тарас тесессĕн те унран ниçта тараймăн.

Тарни вăл пулĕ вилĕмпе пĕр тан.
Эс ху вĕт вăл. Ăçта эс хăвăнтан
тарса кайса ирĕклĕхпе киленĕн?!

Юратура кăна тĕнче илемĕ.
Юратман çын сая каять ахаль.
Чăн Юрату, пул ĕмĕр, ан çухал.

## 12

Чăн Юрату, пул ĕмĕр, ан çухал...
Çĕре çитесчĕ-ха, çĕре çитме сунаççĕ.
Инçе кăранклатать-ха вилĕм — ват çăхан,
эсрелĕ-чунилли, хăтăлма çук сăнавçă.

Анчах кунçулăмăр иртет иккен, иртет.
Инçи — çывăхарать. Пур вăхăт та — черетлĕ.
Çĕртет те тĕпретет, ватать те çĕмĕрет вăл,
тăм чăмăркки туса хурать пиртен.

Миме хытать, юн сивĕнет... Шутлатăн:
самант пулсассăн та, çапах эс кăшт юратрăн.

Қашни чăхах-ши çавăн пек, манса хуйха-суйха,
кунçул тислĕкĕнчен тул пĕрчисем сăхать?
Хăш чух мĕн-ма çав пĕрчĕ пек ытла та,
чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал?!

## 13

Чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал,
эс çук пусмăртисен пачах та.
Пусмăртисем! Çĕр çĕмĕрсе хăçан
асапсăр çырана каçатăр?

Қама юратмалла? Юратăр Ирĕке!
Мĕне юратмалла? Ирĕклĕхе юратăр!
Ма çуратман ăна хальччен? Çуратăр
сиртен малтан çуратнисен тĕл-йĕрĕпе.

Эх, пурнăç, пусмăрçă-эксплуататор...
Мĕн-ма чылайăшĕ пуçа усса утатпăр,
шикпе пусса пыратпăр çĕр çине?

Қартах çĕклесчĕ хурлă пуçсене.
Қалас килет чарса: «Юлташăм, тусăм,
эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ — Юратусăр».

## 14

Эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ Юратусăр,
поэт! Мăнаçлисен патши, Ирĕклисен патши!
Мăнаçлă эс çĕршер çулсем хушши.
Мăнаççăрлăх — чи йывăр, тĕпсĕр пусмăр.

Чăн поэта тытаймăн пусмăрта.
Вăл сăнчăрта та иксĕлми мăнаçлă.
Мăнаçлăх генийĕ, çут тĕнче пек эс аслă,
çут тĕнче пек эс ирĕк, тупата!

Эй, Юрату! Эй, Ирĕклĕх! Туссемĕр,
пĕрле чухне кăна, уйрăм чух мар, илтсемĕр,
эсир хăват илетĕр пĕтĕмпех;

пĕрле чухне кăна чĕп-чĕрĕ, ма апла-тăр,
пĕрле чухне кăна пĕр организм пек,
эй, Юрату, эй, Ирĕклĕх, эсир пурнатăр.

## 15

Эй, Юрату, эй, Ирĕклĕх, эсир пурнатăр
çак тĕнчере никам уйăрайми,
чунри хĕрӳлĕхе, унти çутта упратăр
куллен хăват кӳрсе ытарайми.

Эсир çĕкленипе çӳлтен çӳле вĕçетпĕр;
тĕллев — тивлетлĕ, ĕмĕтсем — таса;
пурăнăçа савса та юратса,
Ирĕклĕхе çăл шывĕ пек ĕçетпĕр.

Савни, тăванăм, ан пытар питне,
чăнах калатăп, шухăшлăн итле:
эс — манăн Юрату, эс — Ирĕклĕх ман, тусăм.

Чăн Юрату, çун ĕмĕр, ан çухал.
Чăн Ирĕклĕх, эс пĕчĕк, эс сахал,
эс мĕскĕн, вилĕ эсĕ — Юратусăр.

*1971*

## ШЫВ ТИПНЕ ÇУЛ

Шыв типнӗ çул типеççӗ çырмасем,
шыв типнӗ çул çунаççӗ вӑрмансем.
Тулта та, пӳлӗмре те чӑтма çук
шыв типнӗ çул.

Хӗвел тивлетлӗ мар пӗртте çӳлте.
Хӗвел, кулса, хаяррӑн пӗçертет.
Иезуит кулли, синкер эмел —
хӗвел.

Мӗн хӗлӗпе юр-çумӑр сирӗлмен,
мӗн хӗллерен çӗре тумлам ӳкмен.
Чуна хӑртать çак, вӑрттӑн вӗлерет
мӗн хӗллерен.

Уяр. Пӗр курӑка та çук ырри.
Ӳсмерӗ çур тырри те кӗр тырри.
Йӑлт ӗнчӗ кайрӗ, çунчӗ. Шанчӑк çук
шыв типнӗ çул.

Хула урамӗ. Тӗтӗм. Сӗнкнӗ çын.
Тӑр-кӑнтӑрла хунар çутать машшин.
Çак тӗтӗмрен, унтан ытла — влаçран,
сывлап аран.

Шыв типнӗ çул типет иккен чӗре.
Шыв типнӗ çул кӑнма кӗтен черет.
Тулта та, пӳлӗмре те пурнӑç çук
чун типнӗ çул.

*1972*

## ТРАКТОРОСТРОЙ ÇУТИ

Чăваш ачи! Завод лартатăн
çунса ыттисемпе танах.
Юрта-пăрта та, çумăрта та,
шартламара та эс утатăн
чунтуртмăш стройплощадкăнах.

Вакунсенче те пурăнатăн,
«общагăра» та — туллиех.
Пуянах мар ху курăнатăн —
укçа купи лекмест тӳрех.

Хăш чух ырса кăшт пуç уссан та,
хуйха ӳксе иккĕленмен.
Çут тĕнчене хăртса усаллăн,
Чăваш çĕрне ӳпкелемен.

Ĕçчен те сывă Чăваш çĕрĕ,
унти сипетлĕ вăшăл çил
чунра пулсан, эс ĕмĕр чĕрĕ.
Ан ман çавна, чăваш ачи.

Ăна эс пăрахса ан кай.
Вара сана пăрахмĕ хăй те.
Ăна сан хӳттӳнте пит хӳтĕ,
хăвна та хӳтĕ пуль самай.

Çĕршыв пĕр пайĕ çак завод.
Тăван завод! Епле пăрахăн.
Пăрахрăн-тăк, юлан хăраххăн.
Явать чунна ним уссăр вут.

Ачам, ан ман ху халăхна.
Сана çуратнă вăл, çын тунă.
Ялан килмен те пурнăç тутлă,
аван упранă сывлăхна.

Ан пулччĕ шелсĕр те куштан,
анчах пулсамччĕ ăслă шухă.
Тăван чĕлхемĕре ан ман.
Мансан, аннў те шутран тухĕ.

Сăлтавсăр ан кăшкăр урра,
сăлтав пур чух ан лар пĕр сассăр.
Ачусене вĕрент ырра,
мăшăрланса çемье тусассăн.

«Чăваш чĕлхи пĕтет» тени
мур чирĕ пек килсе ерсессĕн,
тĕпрен-кăкран пĕтетĕн эсĕ.
Вара харам эс пурăнни.

Вара кăркка пекрех тăн-пуçлă
этем мĕлки пулса майпен
ху тухнă халăхна та, тен,
пуç касăртса пăхмашкăн пуçлăн.

Туртать çак туртăм хăш енне?
Сахал-и пĕр-пĕрне çиетпĕр?
Пĕтермелле-и пĕр-пĕрне?
Тăван та тус пуласчĕ тетпĕр.

Фашизм пур тĕнчере, тăнла,
турачĕсем çăра та вичкĕн.
Таса та çивчĕ тытмалла
хĕçпăшала. Тăшман пит выçкăн.

Идеологи вăрçинче,
рабочи класс, эс — çаръертӳçĕ.
Эп сăвăçă — сăмах кĕтӳçĕ.
Аннем хуйхи — чĕлхем çинче.

Анне хуйхи — тĕнче хуйхи.
Хуйха мансан, курайман савнăç,
каллех, каллех чуралăх сарĕç,
тĕнчен йăлт пĕтĕ тăтăрхи.

Чăваш ачи! Ăс-кăмăл вăйĕ
пĕчĕкленмесĕр таптăр сан.
Кил-терĕш те, машшин та вăйă
ăшне ан пут пуç çухатса.

Пуçу шухăшлама сан кирлĕ
аннӳ çинчен, Çĕршыв çинчен.
Пуçу шухăшласассăн вирлĕн,
тăп-тăнăç тăрĕччĕ тĕнче.

Тракторострой çути! Каç-каçăн
шевли таçта çити ӳкет.
Вĕç-хĕрсĕр ĕç вĕрет. Васкаççĕ.
Чунра — çав çутă, çав инçет.

*1973*

## РАК

Ыратиччен ăна пĕлме те кансĕр.
Хĕне кайсан, пĕлни те усăсăр.
Анчах, çапах, текех çыратпăр «канцер»,
ыйту лартса. Май çук ыйтусăр.

Ыйту — иккĕленӳ. Ăна ялан лартаççĕ.
Пĕлсех лартаççĕ. Кам лартать? Ултавçă?
Ултавçă мар: Çын чунлĕ гуманист.
Онколог-тухтăр, шăппăн йăпатавçă.

Таса ултав... Унпа ма пĕттĕр чыс?
Турра ĕненнĕн тухтăра шанатпăр,
фанатикла хĕрӳн ăшталанса шыратпăр
çук çăлнăça: кашни — идеалист.

Ма шанас мар, ыйту палли тăрать-çке.
Шанатпăр пурте: тусăмăр умрах-çке,
сывах. Инкек асра та çук. Шӳтлет час-час.
Пĕлмест çав, хăйĕн — канцер, метастаз.

Вăл — каснă йывăç. Каснă. Тĕпренех.
Ӳкме, хăрса типме ĕлкĕреймен. Ем-ешĕл.
Çапли çапла та, кăмăл кӳренет:
чĕртесшĕн-çке, чĕртесшĕн... ах, чĕртесшĕн...

Сып-сывă ӳт-пӳрех ма клетка йĕксĕкленчĕ,
ĕмме пуçларĕ ырă клеткăнах?
Апат анать, анать вăл аванах,
çапах хухать этем, юлать тирпе скелечĕ.

Ҫисех выҫса вилет. Хăрушă калама.
Ќура тăркачă нимĕн тăваймастăн.
Ќуҫ умĕнче путать, май ҫук ҫăлма,
путан теме те — шиклĕ... хăяймастăн.

Вăраххăн вилекенĕн чунĕ пек,
ракпа тĕмсĕлекенĕн чунĕ пек,
талансăр, ăрăскалсăр чун ăҫта?
Ун пеккине тупаймăр тĕнчипе.

Тупаймăр ҫăлакан та. Ҫăлакан,
хăватлă ҫăлăнăҫ,— пуласлăхра.
Анчах пур хурҫă шанчăк халăхра:
тупăнманни ялан тупăнакан.

Этемлĕх генийĕ — этемлĕхре.
Этемлĕхе пĕтмешкĕн парас марччĕ —
фашизма кăкласчĕ те тĕпрен,
рака, рака тĕп тумалли тупасчĕ!

*1974*

## ТЕНЧЕСЕМ...

Тĕнчемĕр хыçĕнче татах пур тĕнчесем,
унтан — татах, татах... Пурнăçăма
хакла пĕлмесĕр пурăнни çинчен
ун чухлĕ тĕнчере ман пĕлтерес кама?

Çав аслă тĕнчесем те тăвăр-ши чуна?
Çав йышлă тĕнчесем те шухăшшăн сахал-ши?
Пуç сиввĕн хĕсĕнет, чун сиввĕн тарăхасшăн,
çулăмланмасăр пурăнăç çунать.

Мĕн чул çын нумайрах, эс çавăн чул пĕччен.
Çавна епле туйман-ха эп хальччен?
Çын хушшинче текех хама шыранă,
хама хамра сасартăк тупиччен.

Пурнаççĕ çăлтăр, кайăк та этем.
Чăн пурнăç, тĕлĕк, вилĕм... пурăнаççĕ.
Çывраççĕ, вăранаççĕ, вăранмаççĕ...
Пулаççĕ. Пур. Самантлăх. Шух. Чечен.

*1980*

## ПЕРСКЕРНЕ

Паттӑрсем вилеҫҫӗ ухмахла,
ухмахсем вилеҫҫӗ паттӑрла.

Эсӗ, паттӑр мар та,
ухмахла вилмерӗн.
Эсӗ, ухмах мар та,
фронт мӗнне пӗлмерӗн.

Йӗп ҫӑртийӗ витӗр
эс тухма пултартӑн,
вилӗме ҫӗнмерӗн,
вилӗмрен пытантӑн.

Паттӑрсенӗн ӳчӗ
тахҫанах тӑм пулнӑ.
Паттӑрсем пуҫ хунӑ.
Эсӗ — сывӑ юлнӑ.

Мӗншӗн-ха ҫапах та
орденлӑ-миталлӑ?
Ҫӗнтермен пулин те,
ҫтан — ҫӗнтернӗ паллӑ?

Ҫтан паян эс паттӑр?
Ҫамрӑксем — пӗлмеҫҫӗ.
Паттӑрсем — пуҫ хунӑ.
Ыттисем — чӗнмеҫҫӗ.

Пĕрре мар эс тухнă
йĕп çăртийĕ витĕр.
«Путмĕ те, путарĕ»,—
шухăшлаççĕ питĕ.

Путнисем килмерĕç каялла,
килнисем час пулчĕç аяла...

*1975*

## ЧĂВАШ АМĂШЕ

Çĕр çине тӳперен çумăр евĕр çăваççĕ
çутă пайăркисем.
Юнпа сывлăш пĕрлешнĕ тĕлте палăраççĕ
аннесен сăнĕсем.

Пиншер çул вĕçсе иртнĕ; çулсем тĕлĕнеççĕ:
уямасăр ниме,
сӳрĕлмест-çухалмасть, çав-çавах илтĕнет-ха
«паппине-нянине!»

Ахаль чух-и, ĕçре-и, хаяр вăрçăра-и,
сывă чух, чирлĕ чух,
тĕлĕкре е янк уçă куçпах çывăратăн,
е умра йывăр çул,

аннесен кăвар пек кĕллисен пĕр пĕлтерĕш,
йăлăнни те пĕрре:
— Ырă пӳлĕх, айван ачасемĕр йӳтерĕç,
сыхласам пурпĕрех.

Халь ниçта та ним пӳлĕх те çук, пушă ĕмĕт —
йăлăнса ыйтнисем.
Ĕмĕрхи нянькка эс, Чăваш Амăшĕ, ĕмĕр
пурăнсам, ан вилсем.

*1976*

## УТСЕМ

«Ташласа çеç тăчĕç ирхине —
таçталла такам чĕнет пек çирĕп —
çав утсем йăлт пирĕнччĕ, йăлт пирĕн,—
тет ват çын пăхмасăр ман çине.—

Тăрĕç-и тӳссе кăнтăрлаччен!
Çĕр хыçне утсем кайса çухалчĕç.
Мĕнле вăй, мĕн-ма хăвать, калаччĕ,
ăнланма пулмарĕ халиччен.

Ҫам хăратрĕ? Тарчĕç, çитме çук.
Ҫам калла хӳтерчĕ-хăваларĕ?
Таврăнчĕç, пĕри çĕтсе юлмарĕ;
таврăнчĕç... кун пĕтнĕ, сӳннĕ чух».

*1979*

## ТАСАЛĂХ

Мана çĕклет эс панă çутă.
Сан çутупа илемленсе
вăйлантăм эп. Çак ăнăçуллă
самантăма хисеплесе,
хама вĕрентĕм ăнланма,
хама вĕрентĕм хаклама,
хавалла пултарулăх тупрăм.
Анчах çав манăн вăй, эп туйрăм,
эп хама хам тасатмасан,
хам ялтрама пуçлаймасан,
вăл канăç параймасть чуна.
Сăн кӳчĕ сан çуту мана,
анчах пĕчченлетсе хăварчĕ:
ăçта вăл вăйлисен хăвачĕ? —
Вĕсем ялан хăйсем кăна.
Апла эп вăйлă-и? Кала.

Эп тивĕç-и çапла ыйтмашкăн?
Чун хирĕçлет, чун ыратать.
Мĕскер-ха сан патна туртать?
Ман тивĕç пур-и туртăнмашкăн?
Эп хамра çук тасалăха
туясчĕ, ăнланасчĕ тетĕп.
Ма чун сурать те юнăхать —
ăна пĕр хам анчах пĕлетĕп.
Мĕн саншăн — чунăм ыратни,—
ахаль çунатăп, хапсăнатăп.
Çак чыспала эп юратни
сана чыс кӳреймест, чăнах та.

Куллен-кунхи тасалăхра
Ӳсме те, çĕкленме те сансăр,
çуттусăр, илемӳсĕр, кансĕр.
Эс — хăвăнтан хăватлăрах.
Чуна майпен эп лăплантарăп,
ăна чĕр пиçĕлĕх парса.
Хама эп çĕклеме пултарăп,
ятна хĕвеллĕн кăтартса.
Çапла майпа эп ӳсĕп, ӳсĕп
çĕнме тапраннă çĕн вăйпа.
Кĕлленĕ чун. Эп чăтăп, тӳсĕп,
татах çĕкленĕп — çав`майпа!

*1979*

## АСЛĂ УЛĂХ ПАЯН...

Аслă улăх паян хумлă-хумлă,
ман пекех ир-ирех хумхануллă.
Хăлхара çил сасси илтĕнет,
улăхра шур чечек чӳхенет.
Эп хăçан-тăр кунта яшă пулнă.

Чечек пекчĕ яш чух, чечек пекчĕ,
шăпăр пек юласса тĕлленменччĕ.
Аслăях пурнăçа чăмрăм эп.
Хумĕ çеç хумханса чӳхенет.
Тĕксĕмленчĕ тĕнче, кичемленчĕ.

Сĕм вăрман хĕррипе эп çӳрерĕм,
яшлăха тĕл пулса пулми терĕм.
Аслăях ĕшнене кĕтĕм эп,
ĕшнере сар чечек чӳхенет,
яшлăха тĕл пулма тӳр килмерĕ.

Çут çырма хĕррипе эп çӳрерĕм,
яшлăха тĕл пулса пулми терĕм.
Пытăм эпĕ çыран çинерех,
çыранта çĕмĕртсем çеçкере,
яшлăха тĕл пулма тӳр килмерĕ.

*1980*

## ПИРĔН МАР

Ним те пирĕн мар; çуркунне, кĕркунне,
хĕлле те çулла, чечексем, çулçăсем,
хĕвел, çăлтăрсем, уйăхпа пĕлĕтсем,
килйыш, ялти халăх, атте те анне,—
ним те пирĕн мар; ах, юратнă савни,
эпир — пирĕн мар; ах, мĕскер пирĕн мар —
çав çеç пурте пирĕн... Пурте — пирĕн мар,
пурте — вĕçсĕр-хĕрсĕр пиртен васкани.
Васкаççĕ, васкаççĕ... Çуралтăн кăна,
васкатăн вилме такăна-такăна
пĕр çул, икĕ çул, вунă çул, çитмĕл çул;
васкан та васкан, нимĕнле чарма çук.
Ăçтан эп пулам-ха хавaслă та çепĕç?
Ним те пирĕн мар... Чун, чун! Пирĕн, пирĕн!
Анчах эпир кам? Ах, чунри вăрттăн çемĕ,
ах, эс, çамрăк ĕмĕр, ах, эс, пурнăç ирĕ,
ах, чун пек савниçĕм, савар-юратар та
пĕтеслĕх мĕнне пĕлер мар, савăнтартăр
пире çуркунне, кĕркунне те хĕлле,
çулла, чечексем, çăлтăр, уйăх, хĕвел,
килйыш, ялти халăх, атте те анне,—
манар, йăлт манар ним те пирĕн марне...

*1981*

## КĔВĔÇ ЧУН

Кĕтменччĕ, халăх сăвăçи
пĕрре мана хытах ырларĕ.
Çакна тус пулчĕ илтменçи,
хут пек вăл шурчĕ, хаярларĕ.

Усал ерсен, этем çапла
йăлт улшăнать теетчĕç ĕлĕк:
ĕçес те çапăçас йăла
ун тупăнчĕ, хăпмарĕ,— сĕлĕх.

Малтан çын сутрĕ пуш чунне,
унтан пире вăл сутрĕ, урнăн,
вăл сутрĕ ашшĕ-амăшне,
кĕвĕçесси чакмарĕ унăн.

Пачах пĕлмерĕ çӳçенме...
Суя туссен хаяр каварĕ
нумай шуратрĕ çӳçĕме,
пуçа та çĕклеме памарĕ.

Анчах çырма юхмасть сăрта.
Юрлать-ха кайăк, пур вăрманĕ.
Эп те сывлатăп-ха, хăта,
ман авалхи тымар хăрмарĕ.

Çунса кĕл пулчĕ кăлăхах
ман сборник — сăввăмсен кил-çурчĕ.
Çапах тухмарăм ухмаха,
сив кĕл çинче тăрсан та сулчă.

Кӑларчӗҫ «хамӑн ирӗкпе»
ӗҫрен мана, пӑрахрӗ арӑм,
каймарӑм пурпӗр йӗрӗрпе,
сиртен ҫапах эп хӑрамарӑм.

Таса ҫынна ят ҫыпӑҫмасть.
Эп пурччӗ, пур, татах пулатӑп.
Тен, ырлӗҫ сӑвӑҫсем ҫеҫ мар;
хӑй халӑх ырлӗ, тен. Шанатӑп.

*1981*

## ҪАМ ИРӖКӖ?

Ҫам ирӗкӗ парать пире хӗрӳлӗх?
Ҫам сассине илтетпӗр унӑн сассинче?
Ҫам аслӑ тивлетне кура, эй, пӳлӗх,
илемлӗ ҫакӑ пурнӑҫ, ҫак тӗнче?

Шӑпам телейлӗ манӑн, ӑшӑпа
ҫутта, ӑрӑмласа, чунра тытать пуль ӑрӑм?
Ҫунҫулӑма анлӑлатать шӑпа.
Анлӑлатса, ӑна тӑвинччӗ вӑрӑм.

Ҫапла калать этем, ҫапла шутлать.
Айван! Мӗн пӳрнинчен епле иртейӗ?
Ма ӑнланмасть: самант — типпе юлать
ҫурхи шыв пек тулли этем телейӗ.

Тулать, чакать, килет, каять ялан.
Хӗрӳлӗх — талпӑнать. Ӑна сикме памаҫҫӗ.
Ҫӳлтеччӗ вӑл халь ҫеҫ, тӑваҫҫӗ аяла —
каллех хӑват илет темле асамҫӑ.

Чунсем хӑҫан тӗнче пек аслӑ пулӗҫ?
Епле упрар вӗсен хӗрӳлӗхне?
Эй, пурнӑҫ ирӗкӗ, хӑватлӑ пурнӑҫ,
парсам чӑн ирӗклӗх — этеммӳне!

*1981*

## СЫВ ПУЛ...

Ăнлан, ăнланăп эпĕ те.
Ӑилместпĕр нумая,
пурри пурпа тăмасть, пĕтет,
куçать, иртсе каять.

Эп çĕнĕ уйăх пекчĕ, эс
çут çăлтăр пек чечен.
Ӑалаттăн: чунпала вĕçес
çӳл пĕлĕтсем çинче.

Ăсатрăмăр кун хыççăн кун,
çӳрерĕмĕр те, эх!
Ӑиревсĕрлĕх мĕнне ман чун
пĕлмен, санни пекех.

Часах ӳкерчĕç те иккен,
хуть те епле ăнлан:
ăçтан — çав таранччен инкек?
Ӑичем-салху — ăçтан?

Мĕн сăлтавпа пуçланчĕ çак?
Май çукчĕ-шим çĕнме?
Çапса аркатрĕç пурнăçа,
анчах та вăл сӳнмен.

Сыв пул, каятăп, ан йĕрсем,
каçар мана, каçар,
«тăванăм, тусăмçăм» тесе
чуна эс ан çунтар.

*1982*

## ПУРНĂÇ ТĂРĂХ

Аптăранăн, шар курнăн,
пурнăç тăрăх иртеп.
Лайăххи мĕн-ши пулнă
манăн çак ĕмĕрте?

Шурă юр, уçă сывлăш,
кĕрхи çулçă, тăр шыв,
вут çути пулнă çывăх,
пыл чечек, ун шăрши.

Чаплине чапсăрлатĕç.
Пит аван чапсăрах.
Кăшкăрашрăр, ятлаçрăр,
ним çук урăх асра.

Асра юлчĕ куççулĕ
ирхи шур чечексен;
куççуль мар, сывлăм пулĕ,—
йĕрекен ачасен...

Пурнăç иртĕ, шăпланĕ,
татăлса хĕлĕхле.
Тăтăш çумăр пусланĕ
эпĕ кайнă тĕле.

Лăпкă çумăр-куççулĕ
юхĕ шăп çав тери.
Манра мар тапĕ, юрлĕ
çут тĕнче чун-чĕри.

Пурнăçа çук ÿпкевĕм.
Хатĕр эпĕ пама
çав манерлĕ йĕркешĕн
пĕтĕмпех халăма.

Кÿренместĕп, вăрçмастăп,
вăрçрăр, вăрçăр, тавах,
пурпĕрех эп шутлатăп:
пурнăç ăнчĕ аван.

*1982*

## ШУРĂ КУНСЕМ

Шурă кунсем пас тытса пулнă шурă,
шур мĕлке пек вĕлтлетеççĕ — çук шухăш,
шур акăш пек умлăн-хыçлăн каяççĕ,
сассăр саспа чунăма хайăраççĕ.

Мĕн темелле хыçалтан — пач пĕлместĕп,
акăшсемпе пĕр пулса тĕмсĕлетĕп;
куç уçайми çил-тăман та чир терчĕ
шур самантсем чунăмра çитĕнтерчĕç.

Йăш-йăш! йăшкать сехĕрленнĕ чĕреçĕм —
ушкăн çăхан пуç çинче çихĕрет-им,—
ма вилесле хыпăнтарчĕç-ха шухă
шурă кунсем? Шур кунсем. Шурă. Шурă.

Вилĕм кĕпи чăвашла пулма тивĕç.
Са́вансăр чикнĕ пире, халь те чикĕç.
Мĕншĕн апла, мĕншĕн урчĕ-ха шутсăр
са́ван шевли — юртан ӳкнĕ шур çутă?

Шур тĕтĕмле палкаса куçа кĕчĕ,
кĕтĕр, мĕнех, тĕнче пĕтмĕ-ха кĕçĕр.
Шурă кунсем, ну мĕнех, шурă; вĕççĕр
тек хыпаланччăр, ăсран кайнăн вĕçчĕр...

*1982*

## АХ, УЙĂХ, УЙĂХ...

Ах, уйăх, уйăх, чĕрепе чун терчĕ
пĕрре те хухманран, шав тулăхран,
çутту кĕрхи салхуллă шăплăхра
кĕтмен çĕртен çура аса илтерчĕ —
мана çӳретрĕн эсĕ яшлăхра.

Ан тив, çав савăнăç çиçет самантлăх;
те питĕ ăшă, çутă пулнăран,
вăл иксĕлми пек туйăнса тăрать;
элле тахçан иртсе кайсан та яшлăх,
унта кĕртсе ямашкăн пултарать.

*1983*

## УЯРТРĔ МАР-И...

Уяртрĕ мар-и, уйăх çутатать,
шăрантарса пăхать, кĕре манса,
çурхи вăйпа, хăватлăн вăратать
чун-чĕрене; çуталчĕ çăкасар;
каçхи сĕм-тĕттĕм ирĕлчĕ, юлмарĕ;
чун-чĕрере ман — çуркунне юмахĕ.

Ах, час иртет иккен çурхи илем,
пĕр çухалсан, ăна ăçтан илен,
илейĕн-ши чуна улталаса?
Ан тив, паян ăна эп улталарăм
самантлăха, анчах та каласам,
тӳпе: юлашкинчен уяртрăн мар-и?

*1983*

## ВĔРИ ЧĔРЕ

Ыр вĕри чĕре ыр элчелпе,
хăй вилĕмĕпе вилеймĕ нихăçан та.
Телейпе инкек пĕрле кăна куçаççĕ
пĕр-пĕрне, килĕштерсе чипер.

Пушарта сив шыв телей, паллах,
сивĕре — кăмакари вут-çулăм.
Питĕ вичкĕн сисĕмлĕ яш чунăн
сисĕмсĕр мĕнле пурăнмалла?

Юлаймарăм выляса вăййа,
çӳрес пек çула та çӳреймерĕм,
çын ретне те тулккăн кĕреймерĕм,
виçеймерĕм туссемпе вăя.

Çамрăк пуян чун пулаймĕ чул,
малтанах сисет вăл: пулĕ хуйхă,
улт ура усалăн, учĕ шухă,
çав ута ялан — тумхахсăр çул.

Çамрăк пуян чун пулаймĕ чул,
малтанах сисет вăл: пулĕ савнăç,
савнăçа туссем йĕре-йĕре ăмсанĕç.
Тутлă пурнăç — ĕмĕтри кунçул.

*1983*

## МАН МАРРИ

Ман марри, хуть мĕн ту, манăн мар.
Мĕн ăсаннă — ман мар, килесси — манăн, манăн.
Ăнăçусăр декабрь, ăнăçуллă январь...
Ăнăçуллă-ши? Килччĕ часрах, кил, тăванăм.

Тĕтĕрет çил-тăман мыскари,
пĕтĕмпех мыскара пирĕн пурăнăç тăршшĕ.
Хуть мĕн ту, манăн мар, манăн мар ман марри —
ман марне мĕн майпа ман тумашкăн эп тăрăшăп?

Уйăраймăн çĕртен пĕлĕте,
мăкăрланчĕ пирте хĕлĕпе çиллĕ тăвăл.
Ман пулни манăн мар ĕнтĕ акă пĕртте,
аслă пулнă чунсем аслă мар ĕнтĕ, тăвăр.

Эп кĕретĕп куна, эп тухап,
тертленеп вăрăм çĕр нушинчен тухаймасăр.
Çухатап шанчăка, çухататăп, тупап,
тертленеп тупсăмне, тупсăмне тупаймасăр.

Мĕн вăл шанчăк? Пурнас кун пурри.
Мĕн ăсаннă — ман мар, килесси — манăн, манăн.
Сывă пултăр малти пурăнăç мыскари.
Сывă пултăр пирти мыскара çил-тăманĕ.

*1983*

## УПКЕВЛЕ ЙĔРКЕСЕМ

Çи питĕ пулинччĕ кăштах, хырăм тутă пулинччĕ,
тесе ĕмĕтленнĕ пайтах
эпир вăрçă хыççăн: чĕмрен кайнă çынччĕ
этем вăрçă хыççăн ялта.

Çи питĕ паян, хырăм тутă,— телейлĕ пурнатпăр.
Ан пултăрччĕ вăрçă кăна.
Ах, çав хушăра, тăвансем, тăвансем, мĕн куратпăр:
пĕри перĕнет, тепĕри çакăнать.

Пĕри вăрăпа çакланать, тепĕри çын вĕлернĕ.
Унччен апла марччĕ ялта.
Хăçан, хăш ялта кам хăй амăш çине ал çĕкленĕ?
Унччен апла марччĕ йăлтах.

Эпир ӳснĕ чух, вăрçă хыççăн, ĕçке ярăнманччĕ.
Яшши яшă пекчĕ, ватти ватă пек.
Ĕçлеттĕмĕр хытă, ĕçместĕмĕр, кăмăл туртмастчĕ.
Халь улшăнчĕ ял пĕтĕмпех.

Çуртсем хула пек; машшинсем, гаражсем; тумланаççĕ
яшсем улпутла, хулалла.
Ватта пуç таймасăр, пуçа каçăртса талпăнаççĕ
тĕллевсĕр, таçта муралла.

Ялтан тарнисем пăртакран хулана пусмăрлаççĕ —
укçаллă ĕç пар, пар хваттер,
сĕт-çу, аш-пăш пар, çĕрулми, шур кулачă,—
ыйтаççĕ нумай çав хатер.

Туссем-тантăшсем! Тамăк витĕр тухсассăн та хăвăр,
çуралнă ача-пăчана
ĕçе вĕрентмерĕр, ачаш ывăл-хĕр чунсăрланчĕ пит хăвăрт,—
чун çук-тăк, ăçтан ĕç ăнать?

Чун çук-тăк, ăçтан çыннăн пултăр шеллеслĕх е намăс?
Нумай-и халь намăс ялта?
Каласшăнччĕ те, хăвăрах та куратăр, каламăп.
Ял тивĕçсĕр ырă ята.

Хĕр пуççăн ача тунине намăс тетчĕçĕ, халь каламаççĕ,
е çын тĕрмене хĕсĕнсен,
пиçетчĕç питсем ашшĕ-амăшĕн, хĕрлĕ хăмаччĕ,
хăмаччĕ — тăван-пĕтенсен.

Ак халĕ питех хĕрелмеççĕ. Касрах, ав, пурнаççĕ
виç вăрă — виç вăрăм кашта.
Виçшер-тăватшар çул ларса та пĕри те, курасчĕ,
çынран именмест-çке кăшт та.

Ма вăрă атьсем? Ма ĕçеççĕ, ниçта ĕçлемеççĕ?
Йăла-йĕркене, чĕлхене,
тăван халăха, ят çĕртсе, тĕппипе ирсĕрлеççĕ?
Мĕскер тумалла атьсене?

Чĕре чикĕшет, чун сурса ыратать, тантăш, тантăш,
кала-ха, мĕнле-ха вара,
тĕп айăп камра?..
«Хамăрта! — терĕ татăклăн тахăш.—
Тытса хĕртмелле хамăра...»

*1984*

## АСА ИЛЕС МĔНЕ?

Ача чух аса илес мĕне?
Пурăнман-ха эс аса илмелĕх.
Çуркунне ялан вăл çуркунне:
çутçанталăк ирĕ, çут хĕвеллĕ.

Яш чухне аса илес мĕне?
Пур яш чух, пурах аса илмелĕх;
çуркунне каллех вăл, çуркунне —
çутçанталăк ырă, çут хĕвеллĕ.

Çитĕнсен аса илес мĕне?
Пур ун чух кунсем аса илмелĕх —
çур та, çу та килчĕç пĕррене;
çутçанталăк çутă, сар хĕвеллĕ.

Кĕрчесен аса илес мĕне?
Кĕркунне мĕн çук аса илмелĕх?
Çур та, çу та ĕнтĕ ун чухне
кĕрпеле пĕрлешнĕ — сар хĕвеллĕ.

Ватăлсан аса илес мĕне?
Мĕн-ши пур ун чух аса илмелĕх?
Яшлăхпа ачалăх — çуркунне,—
çавă пур аса илсе йĕмелĕх.

Йӳтесен аса илес мĕне?
Тăм тивсен хал çук аса илмелĕх,
шатăр шăннă пурнăç сĕм хĕлле,
аннăпа пĕрех кунçул хĕвелĕ...

*1984*

## САСĂ

Пĕр сас пытанăçлăн, черченкĕн
яланлăх килчĕ ман тĕле.
Çав сас кăна тăван пĕртен-пĕр,
çав сас кăна ялан пĕрле.
Пĕрре илтсе, чуна хурса,
ăна усратăп эп çап-çуттăн.
Илтсеччĕ эпĕ ку сасса
хăçан? Пĕлместĕп. Ача чух-и
е яш чухне? Туяп вăл пулнăн
манра текех, илтичченех;
ан тив, эп халь те пĕчченех,
анчах çав сасăпа чун тулнă.

Пин сасăран та уйăрайăп
ăна тепре илтес пулсан.
Вăл тамăкăн сасси, вăл — райăн,
вăл — савăнăç, вăлах — асап.
Ăна хуплаймĕ иртнĕ вăхăт,
хальхи е малашри. Çав сас,
мана сăхсан та вилĕм сăххăн,
ян! янăрĕ, чуна савса.
Унпа ялан эп пулăп чĕрĕ.
Вăл вилĕмсĕр, çав сас, тĕнчен.
Хаваслă, тăлăх мар эп çӳрĕп,
юлсан та ĕмĕрлĕх пĕччен.

*1984*

* * *

Вăрçине сирсе ярсан та,
çутçанталăка пăвсан,
тăнăç пурнăç пулмĕ, килĕ
пурпĕр вилĕм, хĕн-асап.

Уйрăмлăхĕ: бомба ӳкрĕ —
пĕтрĕн эс çав самантрах;
анăрарĕ çутçанталăк —
эс пĕтмен-ха, эс сывах.

Анăранă çутçанталăк
иксĕлсе сӳнет майпен.
Вăл сӳнсессĕн, пурнăç та-мĕн
çĕр çинче пĕтет иккен.

Вилĕмĕ планетăн пулĕ
вăрахрах, асаплăрах.
Тухайман чунна эс калăн:
ах, вилесчĕ хăвăртрах!

Биосфера, биосфера! —
çак сăмах анне пекех.
Турă пек ăна шанатăп,
чысласа пуçа пĕкеп.

Пултăрччĕ таса та сывă
биосфера яланах.
«Вăл сиртен килет, ан манăр»,—
çынсене эп йăлăнап.

*1984*

* * *

Ирхи вăрман. Ирхи тӳлеклĕх.
Ирхи нӳр йывăç-курăксем.
Уç сывлăш. Çут ярăмĕсем...
Тĕнчен илемĕ пур темелĕх
ман пур-и чунăмра илем?

Чĕресĕр, туйăмсăр пулаймĕ
пуянлатса тăма чуна.
Ирпе килсессĕн вăрмана,
тем тĕрлĕ шăршăсен вылявĕ
кĕвĕленсе ылмашăнать.

Чечек, çеçке... Çăкалăх, пыллăх
илемлетеççĕ çав кĕвве.
Пĕр çĕнелсе, тухса кивве,
ӳсен те, хăвăнтан эс пысăк —
эс кĕвĕç мар, çимест кĕве.

Хăйне савман этем — ултавçă,
çынна саваймĕ ун чĕри.
Çиçсе тăрать вăрман варри.
Тĕссем выляççĕ те куçаççĕ.
Пим-па! юрлать вĕлтрентăрри.

Ачалăха аса илетĕп,
тухатăп вĕçĕмсĕрлĕхе.
Шăпран та шăп тӳлеклĕхе
чунпа çук юрă ĕнĕрлетĕп,
савса çынна, илемлĕхе...

*1985*

* * *

Курнах пуль çав пĕрремĕш хут:
черчен сăн-пуçлă хĕрача,
куç хăрпăкĕ хура та вăрăм,
темскер ыратнăн эрленсе
пăхса тăрать; пит-куçĕ — вут.
Тăратăп эп те хăраса.
Ирĕксĕрех юпа пек тăрăн
çапла пăхсассăн пикесем.

Иксĕмĕр те сикетпĕр шарт:
хула хулу пĕçертрĕ-ши
е куç кăварĕпе эс, вутăш,
юна хускатрăн, пур вăя,—
чун-чĕрене ыраттарса,
тӳссе курман хатарлă шик
пытанчăк савăнăçпа хутăш
телейлĕн вĕресе каять.

Илемленсе каять тĕнче:
хĕвел çĕкленчĕ сарăлса;
вылять те хĕпĕртет тавралăх;
пыл хурчĕ çăмăллăн, тӳрех,
вĕçсе çитсе, шырать чечек,
ăна çĕре çити авса
сĕткен ĕмет... Пикем, тăванăм,
ик хут эп халь телейлĕрех!

*1985*

## ЮРАТАТĂП

Юрататăп сана, юрататăп.
Вăйлă вут пек хыпса илтĕм эп.
Сăвăпа та сана, юрăпа та
кун çинчен савăнса пĕлтереп.

Мĕншĕнне калама пĕлмĕп, ахăр.
Сансăр ман пурнăç çук, ăш çунать.
Пурнăç ăслă. Пĕртте кайран мар-ха
куртăм эп хамăн çут шуçăма.

Пусрăнмасть, ялкăшать хĕрӳ вутăм,
чун-чĕре тилмĕрет, ĕсĕклет.
Пурнăçра хура-шур нумай куртăм,
иртнисем пурпĕрех хисепре.

Юрататăп сана, хĕпĕртетĕп,
тен, аплах юратма юрамасть?
Ватă мар эп хама, çамрăк тетĕп,
ман килет пурăнас та пурăнас!

Кĕркуннеçĕм çитсен те, çитмен теп,
санпа чух ĕмĕрех — çуркунне,
çеçкесем хушшинче эп çӳретĕп,
пехиллетĕп хама çынсене.

Пурăнас! Ыр тăвас. Йăнăшас кăшт.
Шăварас, ӳстерес чечексем...
Ăслă пул та, çапах чупту, акăш.
Чуптăваймăпăр вăхăт иртсен.

*1985*

## ТӲЛЕК

Чечек ҫыххи ан ҫыхăр пысăк, чăтăр,
вăл пысăкран кичем пусать куҫа.
Ик-виҫ чечек кăна пулин те, тăтăр
кашни ҫеҫки хитрен чăнкăртатса.

Чечек ҫыххи тытса ҫĕрле ан ҫӳрĕр,
ҫĕрле хĕвел чечексене курмасть.
Хĕвелпеле кăна чечек те, чун та ҫӳллĕ,
хĕвел кулсан кăна ҫанталăкăм хавас.

Хура кĕркуннемре чечекӳсем ан шăнччăр,
хăрса ан ларччăр, пурăнччăр рехет
тесе шухăшăмра тататăп сăнчăр,
парап чунри мĕнпур хĕрӳлĕхе.

Чечекĕмсемĕр, чун ҫеҫпĕлĕсемĕр,
ҫеҫке чĕрĕлĕхне, таса тумламсене
чĕре патне тытсан, тĕнче асап-тĕсепĕ
йăлт чакрĕ, манăҫрĕ. Тӳлек тинех.

*1985*

* * *

Эс кун ҫути, кӑвак тӳпе,
унта ялтран хӗвел хӗлхемӗ.
Эс пулмасан — пӗтетӗп эп.
Эс, чун савни, тӗнче илемӗ.

Ӑҫта кайсассӑн та — манпа.
Санран никам та сивӗтеймӗ.
Пурнатпӑр хамӑр вӑхӑтпа,
ӑна пӗлмест тӗнче этемӗ.

Санпа пӗрле ҫӳренисем,
калаҫнисем юмах пек юлӗҫ.
Туяп тӗп-тӗрӗс: пӗрлешсен,
ҫӗн юрӑ хурӑп эпӗ — юрӑҫ.

Ҫурхи ҫырма юр-пӑрӗсем
тапранчӗҫ — ӑшӑтрӗ ҫанталӑк.
Эпир, чунпа чун пӗрлешсен,
пӗрлешӗпӗр санпа яланлӑх.

Ҫын сӑмахне итлемесен,
юп кураканччӗ ҫутҫанталӑк.
Эпир, чӑнах та пӗрлешсе,
йыш тӑвӑпӑр ҫын ӑмсанмалӑх.

Пӗрлешмесессӗн, ма ҫӳрес,
ма калаҫас, суйса усаллӑн?
Ҫӗр ҫаврӑнать... Чӗре йӗрет...
Йӗре-йӗрех хам та ҫухалӑп.

*1985*

## ПӐЛХАРӐМ, ПӐЛХАР

Ӑш вӗҫнӗ каҫсем, канӑҫ ҫӗтнӗ каҫсем.
Ҫаҫхи сӗмелле яри уҫнӑ куҫсем.

Ытла йывӑр шухӑш пуль канӑҫ памасть —
йӗркеллӗ этем ҫакӑн пек хӑтланмасть.

Ҫук ыйхӑ, эп ӑссӑр, анчах ӗҫкӗҫ мар.
Мана эс палла, хӑраса эс ан тар.

Мӗнех, айӑп пур, пуҫсӑрскер, ашкӑнап,
эп гениех мар, ҫитӗнӳ кӑшт кӑна.

Ҫунап, пӑлханап эп, шӑпам антӑхать,
ӗҫлеп, тӑрмашап, кӗрешеп хампа хам.

Чунра — терт-асап, анчах шанӑҫ таса:
тӑван ен пирки эп ларап хуйхӑрса.

Пӑлхарӑм, Пӑлхар, ма чӗнместӗн, сас ту,
ӑҫта ӗлӗкхи-авалхи сан ҫутту?

Ҫаҫхи тӗпсӗр тӗттӗм... Сас ҫук тӗттӗмре.
Таҫта вӗҫнӗ ыйхӑ... Тӗнче тӗлӗрет...

*1985*

## ÇĔНЕЛЕТПĔР!

«Çĕнелӳ те çĕнелӳ!— тет
парти, халăх çирĕп питĕ,—
тĕпренех çĕнелмесен,
малалла епле ӳсен?»

Бюрократ нумай, пĕлетпĕр,—
çухăрать вăл: «Çĕнелетпĕр!»
Сăмахпа кăна темме
шухăшлать-ха çĕнелме.

Пĕчĕкçеççĕ Қавăрлемĕр
пысăк, çӳллĕ халь, атьсемĕр:
кĕлт! ӳкерчĕ юлташне,
ларчĕ унăн вырăнне.

«Çĕнелетпĕр!» — тет хавассăн.
Ушкăн турĕ, акă, харсăр,
силлемешкĕн пикенет
çĕнелес текенсене.

Шăши, Юс, Ашак та Қашкăр,
мĕн павратăр, кăшкăратăр?
Ав, Якур пурна пĕлет
çĕнĕлле те çĕленле.

Ĕçлесе савăнтарман вăл,
тек шăли-вали çав явăл,
май килсен — сана сутать
е сăхать, е хыт çыртать.

Михала-и? Михала-тăр...
Алăк хăлăп хыпалатăр:
«Çĕнелер,— тет,— хăвăртрах».
Çĕнелетпĕр сансăрах!

Ыр çынах Шикли, шикленчĕ,
çĕтĕк кĕрĕкне пĕркенчĕ:
«Тем пулать те тем килет,
шăп ларас-ха луччă»,— тет.

Шăп ларма юрать-и халĕ?!
Пур çĕршыв, тĕнче мĕн калĕ?
Малалла, туссем, урра!
Çĕклесемĕр пуçăра!

Ахальтен-и: «Çĕнелӳ»,— тет
парти, халăх çирĕп питĕ,—
тĕпренех çĕнелмесен,
тĕп пулатпăр, юлташсем!

*1987*

## ÇУРХИ ÇУМĂР

Çурхи çумăр куççуль пек таса.
Сиен мар вăл, усă халь çусан.
Питне çурĕ вĕрене те хурăн.
Питне çурĕ роза та пыл курăк.

Ирхи сĕм лăпкарĕ таврана;
хурлă та, салху та мар мана,
шиклĕ кăшт; сайралчĕ ĕнтĕ çумăр,
вĕтелсе, çăви-çуми çеç çурĕ.

Ҫарăнтарнă хĕлĕх кĕслинне
тупрăм сассăр сассисен вăйне —
пӳрнемсем, эсир ман ĕмĕтсенĕн
инçетри тӳпи, вут кĕвĕ-çемĕ.

Пурте илтĕç юррăма, ан кул,
килĕ çутă та мухтавлă кун,
ăнсăрт юрăлла янрамĕ пурнăç,
янрĕ чаплăн; юрлĕ чаплă юрăç.

Çурхи çумăр куççуль пек таса.
Пĕçертсе-и илĕ хĕн-асап
е хăрушă мăшкăл килсе хуплĕ,
чун çунса кĕлленĕ, çĕнĕ пулĕ.

...Çавăн пек шутлаттăм эп тахçан:
Çумăр, чăн та, куççуль пек таса —
çуркуннĕ; кĕркунне мар; ун чух вăл
питĕрех те йăлăхтармăш, чунсăр.

*1987*

## ЧАВАЙН

Ан манăç, таврăн, килсе çит,
ялан тăрсамччĕ пирĕн çийĕн,
Чавайн Сергей Григорьевич,
тăван шевле, иртнин паллийĕ.

Хальччен те сып-сывах çӳрет,
çăтмарĕ çĕр, çĕре те çитрĕ
сире пырса пере-пере
вĕлернĕ çын, çӳрет-ха çирĕп.

Чуниллиленнĕ çав палач
хальччен те ӳкĕнме пĕлмерĕ.
Çиес тесе ашпа кулач,
сутать вăл кавăн питĕ меллĕн.

Пайта ку пенсие, паллах.
Пасар кĕрлет. Йошкар-Ола
çапах çав çимĕçе илет-мĕн,
камран илет — çавна пĕлмест-мĕн.

Вăл кам — çавна уясшăн мар...
Чавайн, çырса «Элнет» роман,
çырса пĕтереймен,— хураххăн
тăшман тесе персе пăрахнă.

Чăвашăн чунĕ, сур, ырат,
сурать таттисĕр çармăс чунĕ,
чуна чун çывăхне кура,
эс те хĕрхен, шелле те çун эс.

Маттур çĕршыв вăл Мари Эль.
Маттур ачи юрлаймĕ урăх.
Ăна пиллет кулянчăк юрă
чăваш поэчĕ Сениэль.

Чарсам, ыр турă, тархаслап,
нивушлĕ курайми эп пулăп
пур вырăс халăхне капла
çав пĕр пакăçшăнах? Эй, пӳлĕх.

Килсем, тур сучĕ пек эс çит,
çит ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитнĕн,
Чавайн Сергей Григорьевич,
ялан эс ялкăш пирĕн çийĕн.

*1987*

* * *

Ĕнтĕ анăç арки ансăрланчĕ,
хĕрелсе, сӳнесле тĕлкĕшет.
Сӳнеймен ĕмĕтсен асамачĕ
юлашки хĕмсемпе пĕрлешет.

Вăрмансем çаралаççĕ салхуллăн,
вăхăт çитнĕ иккен çаралма.
Кăтрине турамасть ĕнтĕ хурăн,
çил çинче ĕнтĕркет çарамас.

Çулçă вĕçнĕ самант, çулçă, çулçă!
Кулянуллă, синкерлĕ самант.
Кун иртнишĕн пĕлмест мĕскĕн чунçăм
савăнмашкăн, пĕлет хурланма.

Ăш сăмах кая юлнă — çĕклейме.
Йăпатаймĕ савни те чуна.
Пулмалли пултăрах — çын телейĕ
пурăнса курнинче тахçанах.

Пурăнса эпĕ куртăм — телейлĕ.
Ыррине пит курман та, çапах
ӳпкелеймĕп, телейсĕр тееймĕп.
Çут тĕнчешĕн, хĕвелшĕн — тавах.

*1987*

* * *

Пусараймĕ ăша лăпкă канăç,
ылтăн çулçă хуллеççĕн çуни.
Қаймалли çĕрĕре ĕнтĕ кайăр,
кайăр та таврăнсамăр кашни.

Пĕр кайсан, тăпра пулăпăр мар-и,
тăпраран — йывăç-курăк, чечек?
Çутă ывăннă, анăç тăмарĕ
хускалмасăр хăй вырăнĕнче.

Шурĕ-шурĕ те ирĕлчĕ çутă!
Пĕр кайсан, çут тĕнче çутă мар.
Қилĕрсем пурпĕрех, килĕр çулсăр,
çил пулса килĕрсем садăма.

Тĕлĕкре килĕрсем, килĕр чăн-чăн —
пулăр лĕпĕш, саркайăк, юмах.
Сирĕнтен кашниех ырă çынччĕ,
юлаймарĕ, пулмарĕ юлма.

Пусрăнсамччĕ, чĕре, ан çунсамччĕ.
Йывăр шухăш пуçа шуратать.
Қашниех килчĕ, курчĕ, ăсанчĕ...
Çут тĕнче çуратать, ăсатать, çуратать

*1987*

* * *

Пуртех пĕтмен-ха, саланман-ха
çак пăтрашуллă кунсенче.
Çунать-çунать те саламандра,
чĕрех тухать хăй кĕлĕнчен.

Сӳнмен хĕвел, çиçет-ха çăлтăр,
çĕрте курнаççĕ çутăсем.
Туссемĕр, тăвансемĕр, чăтăр,
тӳссемĕр, пырăр çĕнтерсе!

Пĕрремĕш хут-и выçă эпĕр?
Пĕрремĕш хут-и çап-çара?
Пуç касăртса утса çӳретпĕр,
ĕçлес теместпĕр — мĕн чарать?

Туятпăр-ха, аван туятпăр,
сасса хупласшăн пирĕнне.
Çаплах, çапах пуça таятпăр,
тайса, манатпăр тӳпене.

Епле вара пире тур сыхлĕ?
Темле килет-ха самани.
Ман пĕтĕм пурлăх, ырлăх-сывлăх —
калассине каламанни...

*1987*

* * *

Мана вĕлерĕç хамшăн мар,
чĕрем вут пек вĕришĕн,
пăрланнă чунăн ăшăнма
унпа кăшт май пурришĕн.

Джинс-йĕмшĕн мар, укçашăн мар,
сăмахăм тĕрĕссишĕн,
шанман чуна та шантарма
хăш чух вăл пултарнишĕн.

Вĕлерĕç сăввăм-юррăмсем
хĕлхемлĕ çуралнишĕн;
вĕсем çынна çĕклентерсен,
ыр ятăм çĕкленнишĕн.

Ку чăн этем, ак ку — суя
теме те халĕ йывăр.
Вĕлерĕç те, каяп сая,
пулатăп тăм е йывăç.

Таса е таса мар сăмах
мĕнне те тек пĕлеймĕр.
Мулран çук пурнăç тасарах —
уйăрайса илеймĕр.

Ах, хĕрхенетĕп эп сире,
мĕн-ма пăхатăр сиввĕн?
Хама, мĕнех, вĕлерĕрех,
анчах юрра... ан тивĕр.

*1988*

* * *

Хăтар инкекрен халăха, эй, пуласлăх...
Ĕçлет вăл, пурнать, тăрăшать — тăван халăх,—
анчах та темме малаллах каяймасть çав;
темле чул чăрмав тапранмасăр, хупласлăн,
кĕрет ун çине; çук ĕçсем мухтанмалăх.
Çӳлте çеç çаплах каппаяççĕ-ха маçтăр.

Эй, каç тунсăхне пĕр-пĕччен тӳсекенĕ!
Поэт, халăх чунĕн хуйхи, ун асапĕ,
касать-и чунна, чĕрӳне çĕмĕрет-и?
Ыйху çĕтнипе эс, супса, ĕнтĕркенĕ,
хурав тупаймастăн, пуçна та усатăн,
инкек тĕпĕнче çулсăр, тĕлсĕр çӳретĕн...

*1989*

* * *

Тĕрлĕ пуçлăх, тӳре-шара
халăх хушшинчен тухсаччĕ — хăвăрт манчĕ,
халăх тинкине кăларчĕ, хăшкăлтарчĕ,
парăнтарчĕ тытăçура.

Çăпаталлă улпут тени
чăн-чăн улпутранирттерчĕ, тăпăлтарчĕ.
Халăх ырлăхне ӳстернĕ результачĕ —
халăх халĕ те выçă ларни.

Кĕçĕн ăслă тăрпалтайсем
аслă халăха чирлетрĕç, сусăрлатрĕç,
намăс ĕç тума вĕрентрĕç, сассăрлатрĕç,—
çĕрĕк чунлă çăмăлттайсем.

Сăхă чунлă тӳрпилĕксем
ĕнтĕ ĕçлеме мантарчĕç, тек мухтанчĕç,
халăх кĕсйине вăтанăçсăр ухтарчĕç,—
турра маннă антихристсем.

Ленин теттĕмĕр, савса ăна;
унăн ыр ятне варларĕç, сӳрĕклетрĕç,
унăн çулĕпе пымарĕç, шав çӳрерĕç
урлă-пирлĕ те тавра кăна...

*1989*

## АФГАН ÇЕРЕНЧЕ

Килте — атте-анне, садра — вĕллеччĕ.
Пыл хурчĕ те йĕретчĕ пыл çукран.
Афган çĕрне ярса мана вĕлерчĕç,
киле таврăнаймарăм салтакран.

Ялта — савниччĕ, кӳршĕ хĕрачийĕ;
савни пит тунсăхлатчĕ эп çукран.
Патшамăрсен пуртан ухмахлăх чирĕ
киле таврăнаймарăм салтакран.

Афган çĕрне ярса мана вĕлерчĕç.
Атте-анне хӳхлет халь эп çукран.
Савни патне сар тракторист иленчĕ.
Киле таврăнаймарăм салтакран.

Эп тупăка та тивĕççĕр, çав тупăк
ăсра кăна, ман виллĕм те çукран.
Хăруш вут ăшĕнче эп канлĕх тупрăм,
киле таврăнаймарăм салтакран.

Атте-анне ĕмĕтленсе пиллетчĕ
киле килме, ытти ачи çукран.
Афган çĕрне ярса мана вĕлерчĕç,
киле таврăнаймарăм салтакран.

*1989*

## ХĔВЕЛСЕМ

Уйрăлать санпала ĕнтĕ парта.
Çитĕнтĕн. Ĕçӳсем кăшт ăнмаççĕ.
Чĕрӳне кăкрунтан çăлса парăттăн,
анчах та сана ăнланмаççĕ.

Хыпăнса эс ӳкетĕн. Хӳтлевсĕр.
Эсĕ те вĕсене ăнланмастăн.
Хăш чухне куççульне чараймастăн,
хăш чухне тавăратăн шеллевсĕр.

Чăнлăх ку. Пăрăнса-и иртейĕн?
Ĕçпуççем вĕççĕр-хĕрсĕр тăраççĕ.
Пĕлĕтри шевле пек çын телейĕ.
Шевлесем йăлт! сикеççĕ, тараççĕ.

Куртăм эс çуннине чăн малтан.
Çав майпа хама çĕнĕлĕх кӳтĕм.
Туйрăм савăнăç, туйрăм хӳтĕ,
туйрăм пурăнăç яш кăкăрта.

Таврăнчĕç инçетри шевлесем
сан патна, ман пата хĕмленсе.
Чĕртрĕмĕр вĕсенчен хĕвелсем —
поэзин чипер ачисем.

*1960*

## ХĔВЕЛ АННĂ ВĂХĂТ

Каллех,
          миçемĕш хут-ши,
                              хĕвел анать
юнпала пĕветсе пĕлĕте.
Кун пĕтет — çĕнĕрен пулать,
ман ĕмĕр — яланлăха пĕтет.

Вăл каять манран усаллăн, сĕмсĕррĕн,
ним парсан та чарăнмасть.
Вăл каять, шăвать вăл кунĕн-çĕрĕн,
çур минут, çеккунт та тăхтамасть.

Эй, ĕмĕр... Пĕлĕт мар-мĕн, чун юнпа пĕвеннĕ.
Тăн арпашнă. Çитнĕ эп вĕçне.
Ăссăр! Мĕн павранă эп, мĕн ĕмĕтленнĕ,
мĕн хапсăннă, ма кĕвĕçнĕ?!

Çăмăлттай! — малашсем тĕлленетĕп,
халлĕхре те пулин çук та çук.
Çуралаймасăрах эп сӳслентĕм.
Вилтĕм эп... Кĕр, аннем, çурта çут...

*1964*

## ÇĔР ХАЛĂПĔ

Хăрушшăн ахлатать Мускав.
Çухăрашать хавaслă Гитлер.
Ун акăш-макăш савнăç çитнĕ:
Мускав чакать, капут Мускав!

«Мускав Германи аллинче»,—
ак Берлинран хыпар саланчĕ.
Çĕршыв чĕри! Пĕртен-пĕр шанчăк!
Сан куçунтан пăхать тĕнче.

Чăнах та пĕтрĕ-и халу?
Епле ытла та час хавшалтăн?
Мăкалчĕ-и хĕçпăшалу?
Аран-аран-çке юр ашатăн.

Мĕн-ма çуран? Мĕн-ма утпа?
Танка таптас пулать танкпа.
Ҫам-ши, мĕнле пуçпа тапранĕ
тигрпа вăрçма хăр патакпа?

Тапранчĕ çав. Вăл Мускаврах
çӳрет. Вăл пулчĕ çирĕп, паттăр:
«Урра, урра, туссем, вăй патăр.
Çĕнетпĕрех, вататпăрах!»

Çĕршыв ăна: аттемĕр, терĕ,
учитель, çут хĕвел, çулпуç.
Чăнах та, акă, çĕр чĕтрерĕ,
вут çапрĕ, аслати кĕрлерĕ!
Хаштах сывларĕ аслă Русь.

Таттисĕр ҫар килет, килет
хăватлă ҫар, вĕр-ҫĕнĕ ҫар.
Мускав кулать, Мускав итлет,
пăхать тивлетлĕ тухăҫа.

Маттур, патвар сибиряксем
штыкпа тирме ăста пĕлеҫҫĕ.
Инҫе каппайчăк тăшмансем,
Мускавшăн антăхса ӳлеҫҫĕ.

Учитель, ҫут хĕвел, ҫулпуҫ
постран каймарĕ, пуҫ усмарĕ.
Гимнсем юрларĕ аслă Русь,
аттемĕр Сталина мухтарĕ.

Сив енсенче, ҫĕпĕрсенче,
концлагерьсем кунран-кун тулчĕҫ,
коммунистсем салхуллăн кулчĕҫ
пиншерĕн ҫав тĕрмесенче.

Сайралчĕҫ Ленин ҫыннисем.
Ют ҫĕршывра кĕрешрĕ Зорге.
Тăван тĕрмен чул стенисем,
ăна кĕтсен-кĕтсен, ал сулчĕҫ,
ют тĕрмере ун шăммисем.

Ҫĕр хăлăпĕ... Ăна тупса,
пĕлтерчĕ Зорге Мускава.
Мускав, ҫав хăлăпран тытса,
салатрĕ тăшмана тапса.

Тăван тăпрашăн тилмĕрсе,
инҫе халь Зорге тĕлĕрет.
Японие хыт тишкĕрсе,
секрет ямасть вăл тĕрлĕрен...

*1965*

## ИРХИНЕ

«Сывă-и, Атăл, сывă-и, тусăм?» —
тет те хĕвел, йăл кулса ир-ирех,
шурă тĕтре упине хӳтерет.
Шурă тĕтре упа мар — манăн тунсăх.

«Сывă-и,— тетĕп эп те, ир тăрап та,—
Атăл атте, сар хĕвел-асанне?»
Савнă, юратнă Чăваш çĕршывне
ĕнтĕ епле кӳренме пултаратăп?

Пултăм, ан тив, эп кунта усрав ывăл —
Саврăш, Пӳлер те Сăвар енчисем.
Паттăр пăлхар йăхĕнчен ĕрчесе,
халăх хальччен пурнать пек ырă-сывă.

Эп те пурнатăп; çуралтăм — çĕн уйăх —
çитĕнтĕм, ӳсрĕм, савса тĕнчене,
пăхрăм, сăнарăм çынна, ун чунне,—
савнăç шырарăм эп, тупрăм чĕр хурлăх.

Мĕскĕн чăваш! ырă-сывă-и эсĕ?
Пĕтмĕн-и? Ма пурнăç мар куçунта?
Вилĕм илешнĕ унта хăçантан?
Юлăн-ши, çук-ши эс? Килчĕ пĕлессĕм.

Ют халăхра ирĕлмешкĕнваскатăн,
пĕттĕр чĕлхе тетĕн эс, пĕрех хут,
пит тĕп тăвасшăн чунна, хăвна ху.
Хуть мĕн кала та, çынран ан пул катăк —
туп хурçă шанчăк, таса тарăху...

*1988*

* * *

Пур çĕрте те — суялăх, танмарлăх.
Икĕпитлĕх касать чĕрене.
Варринче — бюрократчĕ яланлăх.
Аялта пăчăхать хура халăх,
çитеймест ун сасси тӳпене.

Ленин тетпĕр каллех, Ленин кирлĕ!
Ҫанлĕ пултăр ыйхи, тăвансем.
Ленин сывă ялан, эпĕр чирлĕ,
унăн тенĕ çынсен чунĕ вилнĕ
е çав чун пулайман та вĕсен.

Чăваш çĕрĕ, хӳхле ачусемшĕн,
Çеçпĕл пулнă чи лайăх ачу,
вилнисемшĕн хӳхле, чĕррисемшĕн,
вĕтелсе пыракан чăвашсемшĕн,—
космос тетĕн... çĕрте космос çук.

*1988*

## ХĔВЕЛĔМ, ХĔВЕЛ...

Хĕвелĕн çути, ырă çут,
савап сана, çут вăл саву,
çав туйăм, саву, пӳлĕх вăл; пӳлĕх çук —
эпир тăр-пĕччен; унсăр чун — вутсăр вут.

Чунри тĕттĕмпе çын çын мар,
вăл выльăх та мар — çав этем.
Вутра кĕлленсе хатĕр эпĕ çунма
тискер кĕпĕрленчĕк йышра çӳриччен.

Йĕрлеп те чĕтрен аллăмпа,
калать, ав, синкерлĕ çыру —
пăхсан, умăрта, тет,— телейсĕр шăпа,
курап, тет, пĕтетĕр, пулмасть каçару.

Шăпа тĕп тусан-и çулта,
çак пурнăç сукмакĕ çинче,
хĕвелĕм, хĕвел, эс ан кай, эс çутат,
юрла кĕвĕсем ху пачах сӳниччен...

*1989*

# ПОЭМĂСЕМ



## ШАНАТĂП. ЁМЕТЕ УСРАТĂП...

Человек — есть будущее

*Ал. Блок*

1

Мĕн-ма, Татулăх, эсĕ килсĕр-çуртсăр
çулçӳренпе пĕрех? Иртсе ан кай, кĕрсем.
...Килмерĕ те, кĕмерĕ те. Эп унсăр.
Хам хĕрача-туспа. Кичем. Кичем.

Ман пулаймарĕ çапса хуçнă кăмăл
яланхилле хавасла та хитре.
Мана тӳсме çук йывăр, тусăма, ав, çăмăл.
Чун-чĕремре асса çӳрет сив тăвăл.
Эп палăртмастăп, кулă — сăн-питре.

Анчах миçе пĕлтерĕшлĕ çав кулă!
Ӳпкев. Ирони. Шеллени. Тем çухатни.
«Мĕскер тăвас?» тени салхуллăн.
Юлашки хут ĕмĕтленни.

Черченкĕ хĕр, малтан ума епле хĕрӳллĕн килтĕн:
мĕн чухлĕ вăрттăнлăхчĕ куçусен,
мĕн чул юмахлăх шурă питĕн,
çивĕтсенчи хĕлхемлĕ хăюсен!

Сăну майлах чуну та уçă, капăр,—
пурăна пĕлнин тусанĕ витеймен.
Çавăнтанпа утатпăр та утатпăр,
нихăшĕ те ниçта та çитеймен.

Паян, акă, çитрĕм пулĕ, çитрĕм:
вăрттăнлăхĕ кайнă куçусен,
чĕнтĕм те ятран, сив сасă илтрĕм,
çивĕтре курмарăм хăюсем.

Çĕр çинчи чи хаклă, çывăх çыннăм,
мĕншĕн ĕмĕте калле куçан?
Мĕншĕн йăл кулмастăн ырă суннăн?
Çĕнĕрен паллашăпăр хăçан?

Малашра хăçан-тăр паллашсассăн,
эсĕ пулăн ĕнтĕ урăххи.
Час-ши килĕн, çук-ши, пĕр кайсассăн,
чи хакли, çĕнрен, чи çывăххи?

Çунĕ ман чĕре, пăтранĕ вăл, тасалĕ,
йыхăрса, кĕтсе, манса кунне-çĕрне.
Пусмĕ пурнăçа пĕлнин тусанĕ
вутлă чунăма мĕн ĕмĕрне.

Çав-çавах эп хушăп, çывăх çын тупсассăн,
юратма хире те вăрмана;
çил килсе тухсассăн кассăн-кассăн,
куç-пуçа хуплан юр-тăмана;

сывлăма, чечексене, сап-сарă
тулă пуссине, лĕпĕшсене,
тĕрлĕ чĕрчуна, ăшша, мăнтарăн
çут хĕвеллĕ аслă тĕнчене!

Этеме савма унран эп ыйтăп уйрăм,—
хăйшĕн мар, çынсемшĕн пурăнма.
Ҫам çакна чунпа ăнланĕ, туйĕ,
çав чи савнă çыннăм пулĕ ман.

2

Юратма пĕлетпĕр эп те, эс те.
Юрату ялан хĕрӳ пуласшăн.
Пĕрне çеç пĕлсех пĕтерейместĕп:
хăйпе хăй вăл мĕншĕн çапăçасшăн?

Янăрарĕ шухăш пуçăмра:
«Айăпли — пĕр хăйшĕн çеç çунакан чун,
сивĕ ĕмĕтлĕ хăрушă çын.
Тикĕт чун. Вăл вилĕм пек хура...»

Хальчченех-ха, тен, çавна пулах,
пысăк вырăн çынлăхран анчах килмест,
çынлăх чапшăн панă ятсенчен килмест.
Ҫынлăхсăр çын эгоист, паллах.

Эгоизма пулах çут тĕнчере
тупсăмĕ нумайăшĕн пĕрре:
çутçанталăкран этем тĕсне кĕрсе,
çынсенех тăраççĕ çĕмĕрсе.

Мĕн чул пĕтрĕç поэтсем кăна,—
çын чĕрин чи çывăх тусĕсем!
Ак ума кăлартăм Пушкина.
Лермонтов тухать. Ҫурап Есенина.
Маяковский авă, ыттисем...

Пусмăр пăрĕ витĕр
шăтнă харсăр Çеçпĕл,
хĕвелӳччĕ — Ленин,
Çĕр-аннӳччĕ — Халăх.
Эс веçех вĕсенччĕ.
Эс ĕнентересшĕн
ӳсрĕн вутлăн, çепĕççĕн
Вилĕм чĕтремелĕх,
Пурнăç мухтанмалăх.

Вĕчĕрхенчĕ куншăн,
йӳçрĕ Чунилли,
хĕвелтен хупларĕ,
çĕртен тăпăлтарчĕ.
Сăххăн ярса тытрĕ
Пĕчченлĕх алли.

Кăмăл хуçăк, хуçăк.
Хурлăх хупăрлать.
Çеçпĕлĕмĕр, Çеçпĕл,
шĕл кăварлă чун,
çунтăн эсĕ, çунтăн,
çунтăн, çунса кайрăн.
Хуйхă — пысăк, пысăк.
Пусать... Вупăрлать...

3

Хура чунсем, эсир, кам Çеçпĕле таптанă,
халь те эсир çук мар-ха, çивĕч-ха.
Эппин, ак, итлĕр, кам çĕн юншăн выçăхать,
эп — çеçпĕлçĕ, эп — ун, ан манăр!

Епле чееленсе ан тăвăр ĕçĕре,
туятăп пурпĕр витĕр эп сире.

Ан тив, пĕр ыр сехет, минут эп курам мар,
чун-чĕрене йăлтах касса-çурса пĕтерĕр,
çапах юлашкинчен ман ен çĕнтерĕ
ĕмĕрсенче яланлăх пурăнма!

4

Кун чухлĕ чăваш халиччен эп курман.
Эп хам кунтан мар, килтĕм эп аякран.
Çапах, Атăл ен, йўç ўпкевĕм пур ман:
миçе кăвар чун тўсрĕ хур сан патра.

Пăхсан, ытларах — поэтсем.
Тахçан йыхăрсан та, мĕн-ма, Шупашкарăм,
пирвай килсенех эс мана та лăскарăн,
хытах улталарăн мĕн-ма, илĕртсе?

Ун чух эп, айван, Çеçпĕлпе пĕр çултаччĕ.
Ун пек пĕтĕмпех вутчĕ эпĕ, чăн вут.
Хĕнрен çăлăнсан, сăн-сăпат урăхланчĕ:
«Çапам хăйсене пĕрех хут,
упрам ĕмĕте, чыс упранăн,
чеелĕх туптам, сивĕ, ăслă чеелĕх.
Çĕнсен, кăмăл тулĕ, çĕкленĕ,
вара çăмăл пулĕ тăпрамăм».

Паян, халлĕхе, кăмăл сўрĕк, начар.
Тултан йăлкăшни шалти савăнăç мар.
Мĕн-ма хăш чухне чăвашах чăвашран
çавтер ютшăнать, амăш чунлĕ çынран.

Чăн мар-и-мĕн çак? Эппин, алтăр эс ларт,
ытти халăхран вĕренсе хуть чысла.
Сăхса пурăнни Çынлăха ыр кўмен.
Халь хăй ўксе юлнă та, учĕ ўкмен,
çаплах-ха, çаплах такăнать-ывтăнать.
Çапла хисеплетпĕр-и Ыр Çынна?

## 5

Çук татулăх — мĕн этемĕн пурăнни.
Час-ши пĕтĕ çын хăйне çеç юратни,
хăй уссишĕн çеç виçесĕр тăрăшни,
хăйшĕн тарăхни те çапăçни? Пуйни?

Мĕскертен тăрать вăл эгоизм, мĕнрен?
Чăн тĕпрен илсессĕн, çын вĕлерӳрен.
Юптарса калас-тăк, суту-илӳрен,
ултав-суяран та ылтăн-кĕмĕлрен.

Ылтăн-кĕмĕл — вĕçсĕр хапсăну.
Ылтăн-кĕмĕл, сан хăруш сăну.
Эгоизмăн хĕçпăшалĕ, ĕлĕк, халь,—
эс — вутра, юнра çăрăлакан металл.

Турă та тӳре. Тăватăн пур — çукне.
Пуррине тăватăн çук. Эс çĕр çинче
эгоизмăн аллинче чухне
айăн-çийĕн çаврăнать тĕнче,
йăтăнса тухаççĕ вăрçăсем,
вăрçăсем — ылханлă гитлерсем.

Вăрçă — пынă чух çăтать çынна, кайран —
çын çăтать каллех, усрать аран-аран.
Çавă сăлтавпах, çав вăрçăран
тухаймасть анне больницăран.

## 6

...Хĕл иртнĕ. Çур пуçланать. Хĕвел.
Аннем, мĕнле-ши эс больницăра?
Хĕвел. Хĕл иртнĕ. Çур çĕнтерет.
Эп пĕчченех, пĕчченех тĕнчере.

Мĕн кирлĕ, ылтăнăм, мĕнле эмел?
Ытла та япăхлантăн-çке, ара.
Эс пĕчĕкçеççĕ курăнан, имшер,
кулянчăк куçлă та чипер.

Малта сăртри пĕр çуртăн
мăрйинчен çакланнă —
чӳхенет çут явлăк-тĕтĕм
пурçăн пулнăран.

Çамрăклах, аннемçĕм, ӳкрĕн,
ӳкрĕн те тек тăраймарăн
вăрçă çулĕсем тискеррĕн
авнă-хуçнăран.

Ĕлĕкрех мана сиплеттĕн,
ман пата курма çӳреттĕн,
вăрттăн татăлса йĕреттĕн
эпĕ йăшнăран.

Самайлантăм, парăнмасăр.
Халь вĕренмерен çитсеччĕ.
Хуйхă-суйхă тикĕсленнĕччĕ.
Ĕнтĕ акă, акă ĕнтĕ
вилĕм çĕнĕрен хăлаçланчĕ,
вилĕм, камне уямасăр...

7

Аннеçĕм, терĕм те ĕнер, эс куçна уçрăн.
Эй, пӳлĕхĕм, ку анне мар, ку — тунсăх, тунсăх.
Ку — тунсăх, кӳтекен, йăлăнакан,
этем ăнланаймн хăватлă тунсăх,
тĕрĕс-тĕкел, илемлĕ, килĕшӳллĕ,
ĕнерӳллĕ çут тĕнчешĕн тĕмсĕлни.

Аннем, хĕвелĕмçĕм, эп, сан юну, калатăп:
эс пурнăçран каймалла мар, каймастăн эсĕ.
Нумай-нумай сан пек аннемĕрсен
каймалла мар. Мĕн-ма тесен
ун чух çухалĕччĕ илемлĕ, килĕшӳллĕ,
ĕнерӳллĕ çут тĕнчешĕн тĕмсĕлни.

Çын йăхне пĕтме паман аннелĕх
çав килес гармонипе пĕр тан.
Этемсем çĕнелĕç те çĕнелĕç
çĕр çинче, аннелĕх, эс пуртан.

Халиччен тĕнче пуç çиййĕн
эгоизмăн хĕççи,
çакса хунăскер пĕр улăм пĕрчинчен,
ахăратчĕ: эп хăравсăр, эп хăравсăр!
Паян кун тĕнче пуç çиййĕн
эгоизмăн хĕççи,
çакса хунăскер хурçă кантăраран,
йынăшать: эп халсăр, халсăр...

Çак мелпе чылай çул тăрĕ, тен,
тутăхĕ майпен кантăри те, хĕççи те.
Çитĕ вăхăт, аслă вăхăт çитĕ,
çĕтĕ хĕççи те, кантăри те.
Çулран-çул çĕнелĕç те çĕнелĕç
этемсем çак ăслă çĕр çинче,
Çынлăх хăватне илсе çитерĕç
çăлтăрсем таран, инçе-инçе.

## 8

...Ан кай, ан кай, Татулăх, килсĕр-çуртсăр
çулçӳрекен, килсем, ал пар, ал пар эс ху.
Қилмерĕ-çке, кĕмерĕ-çке. Эп — унсăр.
Қилмешкĕн пулчĕ... Уйрăлтăм... Салху...

Ах, пулаймарӗ ҫапса хуҫнӑ кӑмӑл
кӑрмаххун пек хаваслӑ та хитре.
Мана тӳсме ҫук йывӑр, тусӑма, ав, ҫӑмӑл.
Чун-чӗремре асса ҫӳрет сив тӑвӑл.
Эп палӑртмастӑп, кулӑ — сӑн-питре.

*1963*



## САВРĂШ ЕНĔ

### 1

Кĕтĕм эп тултан кушак пек шăппăн,
хăй çутмарăм кил вăранасран.
Çĕрĕпе ăш çумăр шăпăр-шăпăр
ачашларĕ çурăмран, пуçран.

Инçетрен эп килтĕм. Вĕтĕ çумăр —
ăнсăртран тĕл пулнă ыр пичче —
эп кĕрсен, вырнаçрĕ çуртпа çумăн,
пахчара пăшăлтатать пĕччен.

Пысăк мар эп, çиччĕ-саккăрта-ши? —
çук-ха, çук çĕрле çӳремелли.
Выçнă хырăма такăнтарасшăн
сĕтелте шыратăп çимелли.

Тĕттĕмре ӳкертĕм тимĕр кашăк.
«Пĕррĕс! — терĕ сасă ман енне.—
Тăрана пĕлмен шуйттан кушакĕ».

— Кушак мар ку, эпё ку, анне.
Сансăр эп, анне, пултараймастăп...
сансăр чут вилмерём аякра.

Ёнтё эп сётел хыпашламастăп,
аннене мăйран ыталаса макрап.

Ывăл йёнине илтес темесёр,
хăтăрса калать аннемёр хыт:
«Ай, тур-тур, лачкам йёпе-çке эсё,
хыв часрах, йёмне те, кёпӳне те хыв».

Салтăнсан выртатăп çума-çумăн
шăллăмпа çӳле, сентре çине...
Пахчара чăштăртатать вёт çумăр,
тен, çаплах мана шелле-шелле.

## 2

Ăçта пăхсассăн та — вăрман, вăрман,
Вăрман ачи эп — Саврăшпуç ачи,
анчах та пултăм уншăн чёмсёр çын,
нихçан та савнă ывăлё пулман.

Вăрманăн урăхла, хăйне саккун.
Унта çёрле те, кăнтăрла та — шухă.
Вăрман чёлхи кулянчăк та салху.
Вăрман юрри вăрах та сулхăн.

Эп, вёл-вёл çӳçлё ывăнми сентти,
çич-саккăртах утлантăм пит хавас
ахаль кёвенте мар, юпах Пегас,
утлантăм эп... поэзи кёвенти.

Виç ен — вăрман. Сём-тёттём хырёсем.
Ялан уçлăхалла туртать-çке шухăш-кăмăл.

Йп-янкăр тӳпере шăвать çут пĕлĕт çăмăл.
Кăваккăн тĕтреленнĕ горизонт.

Хĕвел те унталлах васкарĕ çыварма.
Анман хĕвел — пушар, ансассăн — вутпуççи.
Тăрса юлать тавра — вăрман, вăрман.
Чĕтретĕп хăраса — вăрман ачи.

...Иртсех пĕтмерĕ-ха айванлăх халĕ те.
Эп, шеремет, ялан вăл тĕлĕшрен пуян.
Чĕнет çаплах çут уçлăх, горизонт, тӳпе,
Савкаç — сăрт леш енчи пĕр пысăк ял.

## 3

Хăшпĕрисем ытлах юратмĕçин,
нумайăшне кӳреттĕм чăн-чăн савнăç.
Эп каярах фельетонистчĕ (сăвăç!),
ялти шăлйĕренсемшĕн «паллă çын».

Иртме май çукчĕ аслă урампа,
ача-пăча пӳрнепеле тĕллетчĕ:
«Пакунсăр милици!», «Сумел Иванĕ!» тетчĕ,
туслашнăскер кашни фельетонпа.

Сăхаттăм эпĕ тĕрлĕ мăнттая —
куштан пуçлăхсене, кахалсене — сăхаттăм.
Хамăр енчи мĕнпур хисеплĕ ватă,
мана курсассăн, халь те пуç таять.

Ем-ешĕлскер, вĕриччĕ, вĕçкĕнрехчĕ,
савкаçсенче кĕрлеттереттĕм сăвăсем.
Сăвăмсенче ун чух савни, савни çӳретчĕ,
тата — çурхи çут уйăхлă каçсем.

Те ăнланса, те нимĕн ăнланмасăр,
«ҫыранĕнчен» тухатчĕ пысăк зал.
Эп кăшкăраттăм — пӳлĕнетчĕ сассăм.
Эп кăшкăраттăм, вăрттăн мухтанса.

Ҫыннисене тиркесе мар, аудитори пĕчĕкрен,
часах кунта сăв калама пăрахрăм.
Ачалăх иртрĕ. Шухăш ӳкрĕ тарăн.
Кĕрлесшĕн пултăм эпĕ инҫетре.

Анчах, пĕччен пирки, ҫултан аташрăм.
Суя ҫĕнтерӳсем пăтратрĕҫ пуҫăма.
Суя юлташсемпе эп пурнăҫ йăнăш ашрăм.
Пуласлăхăм хупланчĕ пĕр самант.

Кĕртмерĕ, йышăнмарĕ Шупашкар:
ҫукрах-мĕн сас ăна ҫын итлемелĕх.
Савни, пĕрремĕш юрату, ман ҫут хĕвелĕм,
манра ҫын мар шырарĕ,— упăшка.

Ăна качча эп патăм пĕр сăмахсăр.
Тавах турра, ăнлантăм вăхăтра.
Манпа ялан пылак вăл пулчĕ, сахăр,
анчах хăй наркăмăш-мĕн чăнлăхра.

Пурăнăҫра эп тӳсрĕм вĕҫĕмсĕр нумай
тем тĕрлĕ «сахăр» та тем тĕрлĕ «тутлăх».
Пуласлăхсăр, хевтесĕр, чунсăр юлтăм
пустуй ҫунса пустуй кĕлленнĕ май.

Савкаҫ-ял урлă хамăн ялăма
эп ҫитрĕм ҫурма чĕрĕ. Шухăшлăн, асаплăн
ҫӳрерĕм юлташпа урамăн-садăн.
Пульницана вырттарчĕ вăл мана.

4

Тивлетлĕ ен! Тивлетлĕ халăх!
Каллех эп сывă та маттур.
Кирек кампа та тытăçмалăх
хăват та, ăс та, мел те пур.

Анчах тăхтать-ха тытăçу.
Эп «ссылкăна» хама ăсатрăм.
Пусăрăнса ларам пĕр тапхăр,
малашлăх — вĕренӳсĕр çук.

Каçар сăмахшăн, альма матер,
мухтавлă университет:
трамплин тени вăл çак пулать-тĕр? —
тӳрех Шупашкара сикеп.

Каçарăр, сарă пикесем,
Хусан сăнне эсир кӳретĕр,
анчах та, çеçкемсем, куратăр:
эп тем шутлатăп пикенсех.

Ан йăраланăр, вăштăр-ваштăр
иртсе кайсан хитре эсир.
Каçар, каçар, чарусăр флирт,
санран эп писрĕм, таврăнмастăп.

Ман пурнăç пултăр мăнастир.
Чуна ним чухлĕ тăккаламăп.
Кăштах кайăкланам, ан тив,
ун вырăнне кайран çынланăп.

Пуласлăхăм карьера мар,
лаша пек ĕçленин итогĕ.
Туяп: вуншар поэма тухĕ
вулкан пек аснă чунăмран.

...Типтерлĕн майласа çыхса,
çунатăма юсарăр хăвăрт.
Ентешĕмсем, туссемĕр, хăвăр
ан ӳкĕрсемччĕ аманса.

Тăван енсем, тăван Савкаç,
çуралнă ялăм Саврăшпуçĕ,
ман тăнăм çивĕч, кăмăл уçă
сире кашни асилнĕ каç!

5

Мĕскер Христос — кăшт вилнĕ те вăраннă,
тӳпенелле вĕçтернĕ, хуса çит...
Ун пек ĕçсем манпа та пулкаланă.
Христос — тур ывăлĕ. Эп — çын ачи.

Пĕрре çапла, савни качча тарсассăн,
шутларăм эпĕ сарăмсăр вилме.
Мĕн интерес: чун вилнĕ, тăхтамасăр
халь вĕлерес ухмах кĕлеткеме.

Вил чунлăскер, виç каç урамсемпе çӳрерĕм.
Юлашкинчен çĕççе пăрахрăм пĕвене.
Чун вилнĕ-тĕк, эп вилнĕ ĕнтĕ терĕм,
эппин, тивес те мар ӳт-пĕвĕме.

Тепре эп вилтĕм критик «çумласан».
Кун пек тискерлĕхе хальччен курманччĕ.
Пăхап кăштран: суеçĕ-мĕн, ултавçă,
мана тăкăлтарать асап.

Эп чĕрĕлтĕм сасартăк, антăхса,
хăрушшăн, тигр пек эп уткаларăм.
Юрать-ха, критик мĕскĕн янаварăн
чăрр пăхрĕ те... тата — этем уксах.

Виççĕмĕшне эп вилтĕм иртнĕрен
ытарайми чечек пек çамрăк ĕмĕр,
татăлнăран хĕвел пек çутă ĕмĕт.
Çурта çутма эп ыйтрăм аннерен.

Анчах анне кĕрсе çурта çутмарĕ.
Çап-çамрăк ĕмĕр хыççăн — яшлăх, мур.
Мĕн тăвăп ĕмĕр йăлт пĕтсессĕн манăн?
Вăт кун пирки шухăшламалăх пур.

6

Ман ĕмĕр йăлт пĕтсессĕн, эп
çĕрмешкĕн вырттăп нўрлĕ çĕр айне.
Çухалĕ пур тăван, килйыш, атте-анне.
Қураймăп савние, тупаймăп туссене.

Тĕнче хура чаршав хыçне пытанĕ.
Çутатмĕ уйăх, ялкăшмĕ хĕвел.
Ирпе епле хыт авăтсан та кўршĕсен автанĕ,
эп вăранаймăп тарăхса куллен.

Çўреймĕп ĕшнере, татаймăп чечексем.
Вилсессĕн, эпĕ нимĕн те тăваймăп:
тăваймăп чаплă ĕç, тăваймăп айăп,
кулаймăп савăнса, тăраймăп çўçенсе.

Ун чух мĕн — канăçлăх е канăçсăрлăх, е тăшман?
Эп юратаймăп, çапăçаймăп, сăвăлаймăп,
мĕншĕн тесен çут тĕнчерен çухалнă,
йăлтах çухалнă, йĕрĕм те юлман.

Хитре пулни аван хитрелĕх пур чухне,
Сăпайлăх пур чухне — пулни сăпайлă.
Пин шухăш тăрмалать чун-чĕрене:
эп пурнăçа хакла пĕлмен тăмсай-мĕн.

Çынпа харкашнă пустуях нумай,
çут уйăхран, ыр хĕвелтен пытаннă,
васкас мар чух çĕр çĕмĕрсе васканă,
васкас чухне вара тапранайман...

Шухăшсене таттисĕр çĕнетсен,
çĕн вăйпала тулать кулянчăк чун-чĕреçĕм.
Ума чупса тухаççĕ, чŷхенеççĕ,
кăваррăн тĕлкĕшеççĕ ĕмĕтсем.

7

Савкаç куллен ыйха путсассăн,
ун çийĕн, чĕмсĕр тŷпере,
вĕçет ман чун, сывлать вăл ассăн,
мĕн ирчченех вĕçсе çŷрет.

Анчах ларма та, курăнма та
пултараймасть, юраманран.
Хăш чух вăл ярăнать хăлатăн,
хăш чух вĕçет аран-аран.

Анчах сывлать вĕри, хăватлă.
Мĕскер сăнать вăл тŷперен?
Ялта вăл мĕн манса хăварнă?
Мĕскершĕн вĕçсĕр тилмĕрет?

Вăл курчĕ ĕнтĕ хĕллене те,
çил ачисем çуртсем çине
кĕртсем хывса алхаснине,
вăл курчĕ юр макăрнине те...

Сĕткен тăкаççĕ çăлтăрсем.
Часах садсем папка çураççĕ.
Салхуллă уйăх — сар хуралçă —
тухать çут хуйăх сĕтĕрсе.

Паркра çунат çапать яш-кĕрĕм:
ташлать, сикет. Çав хушăра
пĕр йăрăс пӳллĕ çамрăк хĕрĕ
айăккинче пĕччен тăрать.

Ун пуçĕнче пин тĕрлĕ шухăш.
Кăçал вăл саккăр пĕтерет.
Кăкри çинче çиçет значокĕ,
хĕр комсомолка пĕлтĕрех.

Килне çитсен вăл, кĕмĕл пурçăн
çӳçне вăраххăн салатсан,
кулса илет ачашшăн, уççăн,
телейлĕн, сывлăм пек тасан.

Салхуллă уйăх — сар хуралçă —
сăпка юрри юрлать темччен.
Куçсем çаплах-ха хупăнмаççĕ,
шутлать хĕр пурăнăç çинчен.

Вăл пурнăçра пуласшăн факел,
çунса иртесшĕн кĕрлесе,
пурнасшăн мар имшеррĕн, ваккăн,
пурнасшăн анлăн çĕнтерсе.

Эп — пĕрлĕх хăватне пĕлесшĕн.
Ман чун çак сыншăн тилмĕрет.
Ун чунĕпе вăл пĕрлешесшĕн
яланлăх, ĕмĕр-ĕмĕре!

8

Каллех эп çул килетĕп. Саврăш енĕ
темĕн тухатать сĕм-тĕттĕмре.
Те шофер, те грузовик ĕшеннĕ,
те тăман пит вăйлă тĕтĕрет,—

Кивӗ Саврӑш ҫав-ҫавах инҫе-ха...
Ҫӑмӑл мар ҫул ҫӳресси хӗлле.
Аллӑ ҫухрӑмпа эп килелле вӗҫетӗп,
ҫитмӗлпе, ҫӗрпе вӗҫес килет.

Шӑхӑратӑп, кӗвӗлетӗп юрӑ.
Кузовра патша эп, хам хуҫа.
Пичкесем те, эпӗ те шап-шурӑ.
Ҫӑвара кӗрет тӑман, куҫа.

Фарӑсем, часрах тупсамӑр эсӗр
шыраса Кив Саврӑш арманне.
Урана ҫӗре те тивертмесӗр
кайӑп эп анса арман енне.

Саврӑшпуҫ кунтан тата ҫич ҫухрӑм.
Тарӑн вар лекет, ҫырма-ҫатра.
Ҫӗнтермех, ҫитмех ҫула паян эп тухрӑм.
Васкасам, машшин, чуп хӑвӑртрах.

Саврӑш хыҫӗнче — ҫыран, пӗлетӗп.
Кутӑн-пуҫӑн сирпӗнетӗп аяла.
Ылханап юра та, тӗттӗме те,
ӑшӑмра ҫапах та йӑл кулап.

Юпаран юпа тупса, сӑрт урлӑ
Савкаҫа ҫитеп аран-аран.
Парӑнмасӑр, хашкаса маттуррӑн,
вырӑсла хапха умне пырап.

Кӑшт канам та... Люся, хаклӑ ҫыннӑм,
эпӗ ку, туятӑн-ши ҫакна?
Ах, мӗн чухлӗ юр, мӗн чухлӗ ҫунӑ...
Эс тухман каҫран. Йӗр ҫук. Ҫапла...

Ман йӗре те хуплӗ ир енне.
Эпӗ те пулман кунта. Хапха — каламӗ.
Шурӑмпуҫ шӑратӗ тӗттӗме.
Ҫакӑнпа вӗҫленӗ юрату халапӗ.

Ҫитрӗм ӗнтӗ. Халӗ инҫе мар.
Тарӑн вар. Масар. Вара — вӑрманлӑ ялӑм.
Мӗн тери тӳлек те шӑп тавралӑх,
мӗн тери лирикӑлла тӑман!

Ҫенӗкре шакканӑп, тупӑп шӑпӑр,
тахҫанхи йӑла халь те асра,
кӗрӗп эп пӳрте кушак пек шӑппӑн.
Хӑйӑ ҫутмӑп кил вӑранасран.

Салтӑнсассӑнах, тупса кив кӗрӗк,
кӗрсе выртӑп кӑмака хыҫне.
Ир-ирех анне вӑранӗ, курӗ,
ӑшӑ утиял пӑрахӗ ман ҫине.

Ӑшӑ утиял... Аннем, епле эс пурнӑн мансӑр?
Инкеке сиссе, хӑпать сехре.
Чунӑм ҫук ниме те пӑхӑнмасӑр
урӑх тек киле килеймесрен.

...Ыткӑнать машшин. Ҫул тӳрӗ, чалӑш.
Ҫитрӗмӗр! Эй, эй! Епле асӑрхаман!
Сывӑ-и, ҫӗмрӗк кӗперлӗ Саврӑш,
сывӑ-и, усал-тӗселлӗ кив арман!

*1964*



## ЮЛАШКИ ЮМАХ

Пăхан кӳреннĕ ача пек.
Ӳкерчĕкре те эс чĕп-чĕрĕ.
Чунсем пĕрлешнĕ ячĕпе
парнелеймерĕм ылтăн çĕрĕ.

Чуптăваймарăм. Ан вăтан.
Çулсем васкарĕç, иртрĕ вăхăт.
Çапах та эсĕ манăçман,
манăçман пек ман пĕтĕм тăхăм.

Илсе çӳретĕп хампала,
тутунтанах халь чуптăватăп.
Аюх! тесе эс ан кала —
хальччен сана савса мухтатăп.

Хальччен янрать сассу чунра,
ăна типсе хăрма памасăр,—
ман юлашки юратура —
пĕтсе лармасăр, ылханмасăр.

Усал вăл эп çынна савни,
пурах унта эсрел хăвачĕ.
Тен, пурнăçна çăлса хăварчĕ
ун чух сана чуптуманни...

**1**

Шăпланчĕ Прага ĕнтрĕкре

*Р. М. Рильке*

Карл Кĕперĕн карлăкĕ пит капăр,
сыпăкран-пĕр — палăк хуралта.
Шухăшра çеç санпала утатпăр,
чăннипе — эп пĕчченех кунта.

Тĕлĕрсе юхать асамлă Влтава.
Шăппăн куç хĕсеççĕ çутисем.
Юлашки юмахăмçăм, ултавăм,
Прага хĕрĕ, эс те тĕлĕрсем.

Тĕлĕкре мана курас теейĕмĕн —
манран мар хĕрелтĕн вăтанса.
Мĕн тери çут куçусем телейлĕ,
мĕн тери именчĕк те таса.

Пирвайхи тĕспе çиçсе вылятăн.
Саншăн пурнăç — савăнăç, уяв.
Пуç тавра шутларăм та кулянтăм:
мĕн тери иккен шăпам хаяр.

Малтанах — чăн чĕрĕлтĕм, вĕрерĕм;
лăпланса пусарăнтăм унтан.
Малтанах — ăсран каяп пуль терĕм,
пăхрăм та, юмах-мĕн çак, ултав.

Вилес умĕн сывлăх лайăхланнăн,
юлашки кĕрлерĕ пуль чĕре.
Çывăр, Анна, тутлă çывăр, Анна,
тĕлĕкре те уяврах çӳре.

**2**

Темĕн те пур Ылтăн Прагăра.
Юрлакан фонтан, курант, корона.
Çич çăра коронăна упрать.
Пĕр рубинĕ ун вуншар пин крон-мĕн.

Пур Градчаны тенĕ вырăн, Витков сăрчĕ,
тĕрлĕрен кермен те замок, пантеон.
Пур улах та лăпкă хăна çурчĕ.
Шыв çинче вăл, «Рацек» ячĕ ун.

Уйăх çутинче сынсем мăкăртатаççĕ,
кайăк кăвакалĕ нартлатать,
пулăсем пире курма тухаççĕ,
тăрăх та пăхаççĕ, урлă та.

Шыв çинче хуçкаланать мĕлкемĕр.
Темĕн те пур ман астумалли.
Чи хакли çапах та мĕн? Пĕлетĕн:
эсĕ, тусăм, эсĕ — чи хакли.

**3**

Пилĕк сăрт çинчи
пыллăхри хула,
килти пек туяп,
чăт, ан хăвала.
Пилĕк сăввăмра
киленсе пиллем
сывлăх, пархатар,
иксĕлми илем.

Сăруна ĕçсе
маттурлантăм эп.
Пикӳне курса
çамрăклантăм эп.
Илĕртет сăра
шур кăпăкĕпе.
Ӳсĕртет пике
йăл-йăл куллипе.

Шуранка çӳреп
шухă пуçăмпа.
Сасăсăр йĕреп
хурлă куçăмпа.
Пĕлейместĕп-и
тĕлĕ-йĕркине,
мĕн чарать ĕçме
савăш куркине?

## 4

Европа варринче çухалчĕ манăн канăç:
мĕскер çитмест миллиардер çынна,
ма вăрçăшăн çунать? Ма çуратмасть-ха Анăç
хитре хĕрсем, чăн поэтсем кăна?

Ăçта чун çӳллĕшĕ? Эс ăслă хĕр, тăванăм.
Кçусенче илемлĕ шухăш сан.
Чун-чĕрӳнти капланнă туйăм тарăн.
Талпас яшсем çине эс ан пăхсам.

Эс ху — кунта, таçта лере — Морави.
Морависĕр эс вилĕн хуйхăрса.
Тăван çĕршывшăн пур вăя хурар-и,
кирлех пулсан, парар-и пурнăçа.

Эп ӑнланмастӑп, ҫын вӑл вырьӑх мар,
кӑшт та пулин пурах ун чыслӑх, намӑс.
Секспа супать халь мӗн чухлех ухмах.
Мӗн чул ураҫҫӗ... Пылчӑксӑр пурнаймӗҫ.

Пур формула: ҫын ангел мар, этем.
Ҫама калатӑр? Ҫамсенчен кулатӑр?
Ҫын ангел мар, анчах та — ҫын иккен,
ҫак ӗмӗрте фашизма кӑклать вӑл.

Эп килтӗм ыр сунса. Ах, сапӑр тӑвӑр.
Кунпа ҫеҫ пӗтмӗ тус-тӑван юрри.
Эп кӗвӗлерӗм, Прага, пилӗк сӑвӑ —
кашни сӑртна пӗр палӑк пултӑр-и.

Ҫӑмӑлӑра — мухтав, тесе юрлатӑп,
чечен хула, хаваслӑ хӗрача.
Юрланӑ май тӑванлӑха ырлатӑп,
ҫак ҫут тӗнчешӗн хытӑ хӑраса.

5

Таса куҫҫуль сентименталлӗ мар.
Чун кӳтнипе йӗрекенсем сӑваплӑ.
Хальрех кӑна сана эп палламан,
халь, ак, питне куҫҫульпеле ҫӑватӑн.

Епле маттур эс, пиҫӗ, яштака.
Епле эс ҫамрӑк, йӗкӗт пек хастарлӑ.
Тӑван килтен каяссӑн салтака,
ҫӳҫне те йӗкӗтле хитре кастарнӑ.

Ҫат тытакан шур блузки — тамаша.
Ҫат тытакан хӗр брюкийӗ. Ах, мода...
Сана питрен пӑхма эп тӑрӑшап,
чӑрлаттарса пӑхатӑн эсӗ ху та.

Чĕрӳ сикет сан кайăк чĕппилле.
Кус хăрпăкĕ — çăра, хура та вăрăм.
Юлашки хут сăмах ман чĕнмелле —
çул айккинче ална сĕлтсе час тăрăн.

Черченкĕ эс, хăратăп сĕртĕнме.
Сыв пул теме чунтан-вартан хăратăп.
Сыв пул, сыв пул. Каятăп килĕме.
Ĕмĕрлĕхе çакна асра хăварăп.

Ун сӳнмĕ çулăмĕ мĕн ĕмĕрне.
Вăл çутăлнă мана телей кӳмешкĕн.
Тепре курмашкăн пӳрнĕ е пӳрмен?
Е çырнă çаплипех çĕре кĕмешкĕн?

Вилме выртсан та, вилĕм умĕнче
телейлĕ вăхăта умра укалăп,
тек пăшăлтататăп юрату çинчен,
сана каламанне турра эп калăп...

## ЭПИЛОГ

Ах, Прагăна каллех каяс килет ман

*М. И. Цветаева*

Йăлтах, пурте яланлăха — пĕтет, иртет,
анчах унта, аллейăсен сулхăнĕнче,
е шавлă площадьре, е çӳллĕ кĕперте,
çаплах куратăп-ха, куратăп халиччен —
хама. Тен, хам вилсен те, чылайччен,
пĕр çул, ик çул, вун çул, çĕр çул,
эс пулнă, эс çӳренĕ çĕрсенче,
шеллевсĕр ӳкĕнӳн чи çӳллĕ сăртĕнче,
пуç янă мĕскĕн пек, тем шырĕ чун.

Хӗвеллӗ тӗтрере такам таҫта уткалӗ.
Ҫаҫ-ҫаҫ, ҫап-ҫутӑ уйӑх ҫӗкленсен,
ҫӗклениччен те, вӑрттӑн курӑнкалӗҫ
темле сӑнсем, тӗссем те мӗлкесем.
Тем пӑшӑлтатӗ, кӑштӑртатӗ, ҫӗтӗ.
Чун ҫеҫ каллех — пӗртен-пӗр — юлӗ шӑплӑхра.
Чунсен пӗрлешӗвӗ — телейӗм — ылтӑн ҫӗрӗ —
юмах пулса, чыс курӗ халӑхра.

Ах, Прага, Прага...

*1976*



## ЮЛАШКИ ЮН ТУМЛАМĔСЕМ

Эп урăх пултараймастăп,
Революцие пĕтме ан парăр.

*Çеçпĕл*

Ман мĕн ĕç пур, те эсĕр йăнăш,
те тĕрĕс тунă ун чухне:
тăшман тесе хупса усранă
кăвар пек Çеçпĕл Мишшине.

Ман мĕн ĕç пур, те çĕнĕ сирĕн,
те кивĕ пулнă самана:
юнанă, пуç ярасшăн çуннă
эсир çап-çамрăк ачана.

«Каçарнă» та хуса ăсатнă
ĕмĕрлĕхе Шупашкартан.
Вăл асапланнă, тÿснĕ мăшкăл,
вăл курайман сире чунтан.

Пăтранчăк тинĕс кĕрлевне
поэзие куçарнă майăн
хăй пĕтессе вăл туйнă лайăх,
яр-уççăн курнă мĕншĕнне.

...Хаяррăн тинĕс, Хура тинĕс,
кĕмсĕртетет çырансенче.
Вăл сан ачу халь ĕнтĕ, тинĕс,
Украйна ывăлĕ вăл халĕ,
çыврать Украйна чĕрçинче.

Хутне кĕмешкĕн май пулмарĕ.
Эп килтĕм хĕрĕх çул кайран.
Эп куртăм: поэта чысласçĕ,
ятне çĕклеççĕ пур вăйран,
анчах ытла та кая юлнă,
ытла салху-çке шавлани —
чечек типсе хăрсан, каç-ирĕн
канма пĕлмесĕр шăварни.

Миçе ăру ӳссе ан çиттĕр,
поэт — çав тинĕс хĕрринчех,
унтан — Ҫейӳ, Остер енче.
Хыпар, хыпар кĕтет пĕр вĕççĕр —
Тăван çĕртен, Шупашкартан.
Хыпар илмесĕр таврăнмашкăн
çук унăн ирĕк, çук сăлтав.
Вăл — Данте. Байрон вăл. Овидий.
Вăл — çав пăлхавлă ушкăнтан!

# ÇЕÇПЕЛ МОНОЛОГĔСЕМ

**Сиртен канаш ыйтасшăн эпĕ,**
**Ленин**

Эп — Çеçпĕл — пăр çапнă çеçпĕл.
Мĕн ачаран мана туберкулез кăшларĕ.
Шăмшак татти-сыпписĕр сурчĕ, пуç кашларĕ.
Эп ырă кун курман...

Ман çеç-тĕр,
пĕр манăн çеç ытла айван ăс-кăмăл:
кăварлă чунăма ниçта хума пĕлмесĕр
васкавлăн тăхăнтăм хăрушă хăмăт,
поэзи хăмăчĕ, ахаль пĕтес темесĕр.

Ылханлă, кивĕ, çĕрĕк самана!
Эс — çуклăх, выçлăх, мĕскĕнлĕх çăлкуçĕ.
Чир чустипе эс çăртăн юнăма.
Кама кам çăтĕ — тăтăм куçа-куçăн.

Шĕл кăварпа тултартăм юррăма,
харампыра аça пек çаптăр терĕм,
Ĕççыннине, савса, чунран хистерĕм,
чакмашкăн, терĕм, шит те юрамасть.

Чăваш чĕрĕлнине курас килетчĕ.
Эп хамшăн пурăнман, вилме çеç хамшăн вилнĕ.
Эп — Çеçпĕл — çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ,
тин шăтнă çеçпĕл,— мĕскĕнсен шăпиллĕ.

Пăр çапнă çеçпĕл эпĕ. Революцин
Чăваш çĕршывĕнчи хĕçне мана парсассăн,
пĕрле ĕçлекенсем ялт! сикрĕç: «Ют сын!» —
теме пуçларĕç ман пирки пĕр саслăн.

Аппаратра ларатчĕç. Коммунист.
Çап-çутă ată. Чаплă сăсар çĕлĕк:
«Кам иккенне сисмен пулсассăн, сис —
пире дворян тесе каланă ĕлĕк».

Керменсене вырнаçрĕç «дворянсем».
Çуран утмаççĕ. Сăрлă çунапа
саркаланса пыраççĕ. Учĕсем
улма чăпар,— вĕçеççĕ юртăпа.

Рабочипе хресчен выçса çитсе аптранă,
пурăнăçне сыпăнтарасшăн чун хĕнет.
Арканнă, юхăннă хуçалăхне аран вăл
тăраткаларĕ-ха ура çине.

Миллионшар хĕрлĕармеец выçă, çĕтĕк,
тăр-тăр-тăр-тăр! чĕтрет шартламара.
Ман юлташсен — ăш кĕрĕк, сăсар çĕлĕк.
Ăçтан капла, мĕнле майпа вара?

Ман кивĕ шинеле çĕр саплăк лартнă.
Ман урара çап-çутă ată мар.
Эп вăрламан, коллегăсем — вăрланă.
Путвал пек пӳлĕм, нар — хваттерĕм ман.

Çакна сире каламăттăм эп, Ленин,
эсир те тутă пурăнман ун чух,
сире те наркăмăшлă пуля иккĕ лекнĕ.
Эп хамшăн мар, ӳпкевĕм хамшăн çук.

Эп çирĕм пĕрререччĕ. Тен, хĕçне те
тытмашкăн пĕлеймерĕм пит ăста.
Ӳксен те хăрăлтатрăм эп: çĕнетпĕр!
Фанатик пултăм ачалла ăспа.

Эп хамшăн мар... Асра — çĕн тепĕр тапхăр.
«Варфоломей каçне» çакланнă паттăрсем,
сире, сире тăхлан та вут, юр та пăр
ăçтан хупларĕ-ха, ленинçăсем?

Тăшманăрсем мĕн-ма пуртех явап тытмарĕç?
Элекçĕсем мĕн-ма халь те пулин
пуçа усса тĕрменелле утмарĕç,
çӳреççĕ йăл кулса халь те пулин?

Сиртен канаш ыйтасшăн эпĕ, Ленин.
Çав улпутсем пĕркеннĕ сирĕн ят
хăçан яланлăха чăн ленинла çĕкленĕ?
Хăçан тĕп пулĕ тĕрĕс пек суя?

## Пурнăçпа вилĕм кĕвви

Мĕскер-тĕр, питĕ ырăскер, таçта кайса çухалчĕ?
Мĕскер-тĕр, хуйхăллăн, нимле сăмах чĕнмесĕр,
асилтерсе тăрать: «Вăл вилчĕ, ун хăват сахалччĕ».
Тен, çавăнпа эп пурăнас теместĕп.

Çук курайманлăх, çук хыпса çунни те,
Вăл вилчĕ, çĕтрĕ — кĕрешес хастарлăх.
Çав уйăх çурă тĕрмере ларни те
çителĕклĕ иккен мана хуçмалăх.

Эх, айванкка... ма кашкăр моральне пăсатăн?
Пĕччен пуçпа эс нимĕн те тăваймăн.
Хăй пек юрламасан, хирĕçлеме пăхсассăн,
мещен ытла та хытă тавăрать-мĕн.

Вĕсем вăрларĕç, эпĕ вăрламарăм.
Вĕсем пытарчĕç, эпĕ пытармарăм,
влаçа улталамарăм, взятка, тĕрлĕ парăм
пухса, арча тĕпне хурса пымарăм.

Патшанни пек ман кăмăл — турă лартнă тейĕн
ĕмĕрлĕхе çав пысăк вырăна.
Лач! çеç сурса хăш еннелле иртейĕн —
пĕрле ĕçлен иккен те... парăнан.

Парăнмасан, элек айне тăваççĕ,
парăнтараççĕ, сăлтавне тупаççĕ:
эп Хусанта чухне юстици уйрăмне
хыптарчĕçĕ вут-çулăм çăварне.

Ĕç хатĕр: хĕтĕртсе эп вут тĕрттернĕ;
суя хутсем, хура ĕçсем ман йышлă пулнă,
эп çавсене вут-çулăмра пĕтернĕ;
хĕтĕртнине Миронов илтнĕ, курнă.

Тăм писменсем допрос пекки пуçларĕç,
эп, тарăхса, тăрăхлама пикентĕм:
техничкăна, ват карчăка, пике, теп;
ăна, теп, тахçанах савса куçларăм.

Юстици çурчĕ çеç-и, Шупашкар, Чека
çунма пултарĕç, тетĕп, çирĕп сыхлăр.
Юстици мĕн вăл... çунчĕ... пысăк-и ку çылăх...
Питрен сурас килет чиновника.

Тĕнче пуш-пушă... Приговор, тĕрме...
Дневник, дневник... ăна вĕсем вулаççĕ;
чуна пырса кĕрсе тислĕклеме,
вуланă май ихĕлтетсе кулаççĕ.

Идеалист эп. Идеализм — чĕр вилĕм
çак суккăр та хăрушă вăхăтра.
Айван! Тўркăмăллăх, тăванлăх ыр кĕввиллĕ
гармонисем шырарăм эп çынра.

Хĕрарăма савса телей курмаваскарăм.
Эп ирĕлтĕм вăл кăшт япшар чĕнсен.
Урăххине чунран хисеплесе,
мана та вĕçертмерĕ çав хĕрарăм.

Ăна çут çăлтăрăм, хĕвелĕм теттĕм.
Вăл — манăн çуркуннеччĕ, пурнăç ман.
Хам пысăк вырăнти çинчен пĕлтертĕм —
тус савăнчĕ, хистерĕ курнăçма.

Куллен çыру килетчĕ. Халь пăчланчĕ.
Халь, эп çӳл вырăнтан персе ансан,
Хут татăк те ямасть, пĕр татăк, лăнчăр-ланчăр...
Епле — çын усăмлă, епле — ансат!

Çапла ансат эп пулаймарăм ĕнтĕ.
Çын пек эп пулаймарăм ниепле.
Пуçра — çăра тĕтре, чунра — пăрланчăк ĕнтрĕк.
Те пурăнап, те çук эп... тенепле.

Ни ватă мар, ни çамрăк, ни арçын... такам эп.
Пуçа та çĕклейместĕп — чир иртмест.
Çапах та çăпата сырса пӳртрен тухам-и,
ун чух та пусмăрлан-ши, вилĕм, эс?

Эп, мăшкăла юлса, çын куллинче вилетĕп.
Эп — пĕр-пĕччен, пушхирти пек пĕччен.
Киле çитсе вилес, ямаççĕ çав киле те.
Хура куççуль тумлать, тумлать чун тĕпĕнчен.

Искусство, кĕнеке, поэзи — манăçра.
Веç манăçра — эп хама хам та мантăм.
Эп вилмеллех, ĕмĕрлĕхех амантăм.
Эп ытлашши çак тăвăр пурнăçра.

Тӳрккес те намӑссӑр эп пулмаллаччӗ, пурнӑҫ,
ҫын куҫҫульне курмасӑр ҫӳреме.
Эп пӗлеймен — мӗн ачаран эп курнӑ...
Таткаласа вута пӑрахрӑм чӗрене.

...Епле вӑл йӗрӗнчӗк, йӑлт, витӗрех туйса,
ху вилнине пӑхса тӑмашкӑн,
хӗрарӑма, ҫав инҫетри туса,
сывпуллашса ӳпкев ямашкӑн.

Сыв пул, «аппаҫӑм» Нуся, ална сул.
Сан айӑп мар, эп — ӑслӑ пулаймарӑм.
Эп — яш — йӗпе сӑмсаччӗ, эс — хӗрарӑм.
Ӗмӗрлӗхе каятӑп, сывӑ пул...

### Элекҫе

Миронов, эс ухмах ҫын мар,
эс ӑслӑ, сан ҫиллӳ ҫеҫ ӑссӑр,
анчах хӑравҫӑ эс чунпа.
Сан час вӗҫет хуха та сӑсӑл.

Мана кайса сутсассӑн лартӑн
сахаринпа эс чей ӗҫме.
Сисмерӗ ку тесе шутлатӑн —
ай-ай маттур та чее-ҫке!

Ун чух та, халь те, ҫӗр ҫултан та
туятӑп витӗр эп сире.
Мироновсем! сутма сутатӑр,
сехрӗр хӑпать сутмассерен.

Вуншар ҫултан киле-киле
куҫӑрсенчен эп чӑр! пӑхатӑп.
Чӗрӗр пулса каять пӑр татӑк,
чӗлхӗр «эй, турӑ» текелет.

Анчах та пулăшмасть çав турă.
Эсир ун чаплă ывăлне
тĕнче пуçлансанах тĕп тунă:
пурнать легенда, кивелмест.

Хура чунăрсене тыттарнă
эсир чи çăткăн шуйттана.
Миронов, эс мана хуптарнă,
унтан «хăтарнă». Эс сив тарлă.
Çапах та ху çын шутланан.

Чейпе кăна-ши эс тарларăн?
Чейпе тухать-ши сивĕ тар?
Сан ман умра виçесĕр парăм.
Çухал! Сан пек эп мĕскĕн мар.

## Çĕнĕ шанăç

> Çеçпĕлĕн «Çĕнĕ шанăç»
> ятлă сăвви пурччĕ,
> çухалчĕ те, тупма пулмарĕ.
>
> *Ваçанкка*

Чĕрем, ан кулян-ха, ан татăл,
пĕр эпĕр çеç мар тĕнчере.
Ирех хум хăвать, ав, мăн Атăл,
ирех саламлать вăл пире.

Пăлхан та шавла, аслă Атăл,
ан парăн, ан парăн, чĕре.
Йăваш эс ан пул, эс пул паттăр,
чĕнме ан пăрах çĕн çĕре.

Чунра капланать çĕнĕ шанăç.
Çĕршыв вăранать, чĕрĕлет.

Ултавçă чунсен пăкки шанĕ.
Айванлăх тĕтри сирĕлет.

Вуншарăн, çĕршерĕн çĕкленĕр,
çĕршывăн хĕрӳ ачисем,
чее, тĕрлĕ тĕслĕ çĕленĕн
пуçне лапчăтма килнисем.

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр...
Эп таврăнăп, килĕп часах.
Çĕнне мухтаса юрă юрлăр,
юр юрлăр чыса мухтаса.

Ҫаллех тăвăлсем илĕртеççĕ.
Вилмешкĕн тухмастăп çула.
Сыв пул, Шупашкар, сыв пул, Теччĕ,
Çĕршыв, сывă пул, сыв пулах.

Мана эс, çĕршывăм, хурламăн.
Ҫаçарăн эс те, ват анне:
Чăвашшăн чуна памалла ман,
Çĕршывшăн — вута кĕмелле.

## Выç псалом

Çеçпĕлĕн «Выç псаломĕ»
пилĕк сăвăллă пулнă.
Вĕсене тупма пулмарĕ.

*Ваçанкка*

Ҫивĕ кунăн шăмă алли
хĕрес çумне çĕршыва пăталарĕ.
Тип шăллă выçлăхăн çăварĕпе
çĕршывăма кышлать, кышлать, кышлать.

Халăхăм тĕнче тăрăх саланчĕ.
Çĕтĕк-çурăк çынсем — чăвашсем —
ах, пиншерĕн çул тăрăх сулланчĕç,
ӳкрĕç, хытрĕç, тăмарĕç ӳксен.

Шăммипе тирĕ çеç, тирĕ те юнлă-пӳрлĕ.
Шăна пек тăкăнаç шартлама сивĕре.
Станцăран вĕсене çунапа турттараççĕ
вутă пек пăрахса... Ал-ури сĕтĕрнет.

Чунĕсем тухайман мĕскĕнсем-тăвансем,
çарапуç, çараçан, çаруран,
çап-çара çунаран уртăнса, тиенсе,
илтĕнми ахлатаççĕ, сывлаççĕ аран.

Пасарсем çăкăрпа, салăпа тулса ларнă,
мĕльюншар тенкĕпе сут тăваççĕ унта.
Украина! Қейӳ! Қур — чăваш сусăрланнă.
Çăкăр пар! Ма курмасăр утан?!

* * *

Пĕрене пӳртсем — тар тертлĕ пӳрт-çуртсем —
ыйткалаканла халран кайса пăчланчĕç:
хăрса хытса выртаççĕ, чирлесе выртаççĕ,
вилсе выртаççĕ выçă анасем.

Выçлăхран тарма хал çук çынсем
шыçăнса кайса пӳртрех лăпланчĕç.
Ял çинче юлмарĕ выльăх мар, пĕр анчăк,
йăлт пĕтерчĕç, йăлт, пусса çисе.

Çăвара хыпма юраманни те
çăвара кĕрет, кавлеттерет.
Питĕ тутлă, питĕ тутлă, питĕ...
Авкалать-хуçать те çĕмĕрет.

Пӗчӗк ачасем ӗмеҫҫӗ типнӗ кӑкӑр —
хуларан ҫинҫе ал-урисем.
Кӗсенне хыҫма та кӑтӑр-кӑтӑр
хал ҫуках иккен мӑнтарӑнсен.

Сарӑ инкесем типсе ҫунса кӗлленнӗ.
Мӗлке пек ҫӳрет-ҫке хӗрупраҫ.
Ял ҫинче унччен каҫ-каҫ кӗрленӗ
юрӑ-сӑвӑ вилнӗ, янрамасть.

Уй-хирте, урамра — вилесем.
Пуҫтармаҫҫӗ, ҫын ҫук, пуҫтармаҫҫӗ.
Йывӑр, йывӑр... ах, чун... пуҫ пӑчланчӗ.
Укӑлча патӗнче — вил-шӑмсем.

* * *

Айваннӑн Атӑл ахлатса выртать,
сар хумӗсем ҫӳп-ҫаплӑ, ҫӗтӗк-ҫатӑк,
чун хавалпе вӑраххӑн йынӑшать. Мӗскӗн Атӑл
Ҫӗршывӑмшӑн пӗр сассӑр макӑрать.

Ах, Атӑл, Атӑл, лӑплансам, ан макӑр.
Тен, пулӑшма мел тупӑпӑр, тӑхта.
Ҫӗршыва тамӑкран ҫӑлмасӑр
ачин канӑҫ пултӑр ӑҫтан?

Анчах эпӗ хам та инҫе ҫав,
выҫса тӗмсӗлетӗп куллен.
Киле ӗмӗтсем ман вӗҫеҫҫӗ,
хыпар илейместӗп килтен.

Ҫапах та эс, Атӑл, ан макӑр,
мана эсӗ, Атӑл, каҫар:
сана шеллесе ку эп, акӑ,
йӗрме чараймастӑп куҫа.

* * *

Шăм выçлăх аллинче çĕршывăмăн чĕри.
Пăрпа пăрланчĕ уяр чечеклĕ шанчăк.
Чĕресенче талса çухалчĕ, ах, пытанчĕ
анчах пуçланнă чĕрĕлĕх юрри.

Çĕршыв чĕри тапма чарăннине
илтессисем те çитĕç-ши, эй, пурнăç?
Пĕр выçлăх çеç-ши çĕршыва тĕп турĕ?
Ҫамсем ăмсанчĕç эс чĕрĕлнине?

Мана хама тата камсем йĕрлерĕç?
Ҫаллех пуç пулĕ-ши çав çĕрнĕ самана?
Епле-ха тӳр чунсем ут йĕнерлемĕç,
епле-ха туймĕç вăрттăн тăшмана?

Яланлăхах пăрлантăн-шим, çут шанчăк?
Пушхир пулса юлатăн-шим, çĕршыв?
Ҫамсем юрра хуса яма хушаççĕ?
Тасалмĕ-ши нихçан вĕсен шăрши?

* * *

Малта хĕвелччĕ, çĕнĕлĕх хĕвелĕ!
Мухтарăм Çĕн Ҫуна, чуна парса.
Эп шантăм, эп ĕнентĕм, эп хĕмлентĕм,
тĕп пултăр, терĕм, хурлăх та асап.

Ҫунçул уйне ака тума эп тухрăм.
Пĕр юрласа та, пĕр сăвăласа
вăя çĕршывшăн шеллемесĕр утрăм.
Çĕн Ҫун ыталĕ, терĕм, савăнса.

Тем пулчĕ: ура хучĕç те ӳкерчĕç —
те хамрăнах, те ирсĕр тăшмансем...

Кĕтеттĕм килессе вуншар чăваш поэчĕ.
Килмерĕç, сас памарĕç поэтсем.

Хĕвел пытанчĕ. Ĕмĕт сӳнчĕ. Чунăм,
сив çапнă чунăм, хыпăнса çунмасть.
Ăçтан, епле хыпайтăр савăк çулăм
çĕршыв пĕтнишĕн çурăлан чуна?

Хĕвел, хĕвел! Эсĕ пур чух ăна
çĕн юрăсем саватчĕç çивчĕ саслăн.
Чĕлхе çухалчĕ... Çĕршыв вилет пулсассăн,
кама эс кирлĕ, юррăм... Қала, кама?

### Юлашки чĕл умра...

**«Юлашки чĕл» тени те**
**пысăк сăввах-мĕн.**

***Ваçанкка***

Юлашки чĕл алра, юлашки чĕл.
Апат — юлашки хуран.
Выç кусла ыранăн вил пичĕ
шур шăллăн пăхать, пăхать куçран.
Юлашки чĕл умра... Юлашки чĕл.

Хĕнесе чунне илнĕ лаша-выльăхла
эп чĕтретĕп, чĕтретĕп, чĕтретĕп.
Ах, мăнтарăн тĕнчи... пĕтрĕм, çитрĕ черетĕм...
çавă çеç пит начар — тусăма тунсăхлап.

Илтĕнет аякран тăван çĕр ахлатни.
Çуркалать, мамăклать, какайлать чĕрене
Шупашкар йынăшни, йăмăка выç анне
юлашки çыртăкне хыптарни.

Инçетре эп. Пĕччен. Пĕр-пĕччен.
Мана пыйтă кышлать, чир ĕмет.
Йытă пек çухалса, сĕтрĕнсе çӳреме
ĕнтĕ тиврĕ мĕн чун тухиччен.

Çутă кун килес çук. Çын çынна таптать çеç.
Шанчăкăм пăрланса шăнса хытрĕ.
Пăнтăхса тăварланчĕ каллех çут тĕнче,
кăмăла хурлăх хуçрĕ, чуна вилĕм витрĕ.

Тусăм, тус, эс ăçта? Эс илтсеммчĕ, килсеммчĕ.
Шанчăкăм, çĕтнĕ шанчăк, ăçта эс, ăçта?
Кăшт вăй пар Çеçпĕле. Çĕн чăваш çĕн поэчĕ
çĕнĕлле юрлаймасть, йӳç куççуль çеç çăтать.

Юлашки сăн умра, юлашки сăн
тата — выçă куçлă ыран.
Инçетрен те пулин, Нуся тусăм,
хавассăн пăхсам, пăхсам куçран.
Юлашки сăн умра... Юлашки сăн.

## Пăч-тĕттĕм тӳпере — çут çăлтăр

Пăч-тĕттĕм тӳпере — çут çăлтăр.
Çун, ылтăнăм, çун, кĕмĕлĕмçĕм, çун
сӳнессине сисмесĕр, йăлтăр-йăлтăр,—
артаклă чунăмри вĕри куççуль.

Ялта йытă сасси нумай.
Сукмак çине хăр çулçă çунă.
Ман çамрăк чун, салхуллă чунăм,
эс йытă мар, хăр çулçă мар.

Аманнă акăш вилес умĕн
пăшăрханса юрланă пек,

юлашкине юрлатăп эп...
Эй, чунăмçăм, эй, тăлăх чунăм.

Анчах юрра итлесшĕн мар
ни савăк Нуся, ни çĕршывăм.
Хал çук пулсан та каçарма,
сунап çаплах телей те сывлăх.

Тен, калĕç, тавçăрса илсен:
«Аманнă акăш вилес умĕн
хăйне тăнламанне пĕлсех
пире хĕвеллĕ пурнăç суннă».

## Юлашки юн тумламĕсем

Юн хуплать куçăма, юн тулать, юн палкать.
Ăшчике, чĕрене, мимене касса çурчĕç.
Эп — пĕрпĕтĕм суран. Урчĕç, урчĕç...
Пĕвĕм тăрăх чĕп-чĕр юн юхать.

Юрататпăр тесе, сăнăпа
чĕререн витĕрех яшлаттарчĕç.
Эп ӳксен, йĕрĕнсе, лач! сурса таçта тарчĕç.
Никама кирлĕ мар,— çавăнпа.

Сĕтĕрнетĕп. Хыçра — юн йĕрсем.
Тутă, шукăль туссем ахăраççĕ.
Пур çĕленĕ — элекçĕ-çăхавçă —
куç хĕсет вĕсене, шăл йĕрсе.

Ав, хĕрарăм курпун мăшăрне, —
Нуся, эп чуна панă хĕрарăм,—
хăлхинчен тем калать, асăрхарăм.
Леш йĕрет кавăн тĕслĕ шăлне.

Мимене чир çиет, макăрса чарас çук.
Хупланасшăн манран çутçанталăк.
Чĕрĕлле эп çĕретĕп. Çур çул е çулталăк
юлнă санăн, Мишша, пурнăçу.

Тăпăлтарчĕç манран çĕршыва,
çавăтса пуç касма илсе кайрĕç.
Хурлă чунăн çăра юнлă тарĕ
уншăн çеç чашкăрать çав-çавах.

Юн тумлать... Ман пулмарĕ талант...
Юн тумлать, юлашки юн тумламĕ.
Пусарать арман чуль, пĕтрĕм, урăх пулаймăп.
Юн тумлать,
юн тумлать,
юн тумлать...

## ПОЭТ АН ÇУТА САНАРĔ

(эпилог вырăнне)

Кам тухрĕ тĕрĕсе: элекçĕ
е Çеçпĕл — шĕл-кăвар поэт?
Кам ячĕпе сăмах илеççĕ?
Кам ячĕпе курса çӳреççĕ?
Кам вутлă тăвăл пек кĕрлет?
Кам тухрĕ тĕрĕсе? Пĕлесчĕ.
Тен, эсĕр, Çеçпĕл тӳрисем,
ним айăпсăр пулсах поэчĕ
хыпса çăтасшăн суннисем?
Кам халăх чĕрине вырнаçрĕ?
Кам ячĕ юлчĕ ĕмĕре?
Ма Çеçпĕлшĕн йĕре-йĕре
савнийĕсем çӳç шуратаççĕ?
Мĕскершĕн-ши тавçăраймастпăр
çынна туймашкăн вăхăтра?

Мĕн-ма час-час малта тăрать
тискерлĕх?
Мĕншĕн?
Қалаймастпăр.
Пĕлетпĕр: пурăнăç тиркенĕ
ăна çак çутă тĕнчере.
Мĕнле капла? Тен, чăн-чăн гений
куç хупрĕ — çирĕм иккĕре!
Хупасшăн марччĕ. Хуçăк кăмăл,
хăрушă чир те юрату
пурнас кунне пĕтерчĕç хăвăрт.
Элек... Асап та ырату...
Çакна калам: епле урсан та
элекçĕпе суя тӳре,
Çеçпĕлсене тытса усратпăр
чун патĕнче те чĕрере!

*1963, 1965, 1966 çулсем*



## ХĔВЕЛ ЙАХĔ

Эс килессе кĕтеттĕмĕр ялан!
Эс таврăнтăн та çăлтăр пек çунан,
тивлетлĕ çĕнелӳ, умра йăлтăртатса,
тӳр чунлă çынсене çул кăтартса.

Эс пур та тĕнчере, эп тăлăх мар;
эс пур та, шанчăклă туяп хама,
ан тив, хăш чух, шанса пура-çука,
çухаткалап пулин те шанчăка.

Вăл çухалсан, çĕтетĕп тĕттĕмре,
çул тупаймастăп, вилнĕ пек çӳреп;
эс пур та, çавă тĕттĕм сирĕлет,
пуçа усса утмастăп çĕрелле,

тупатăп çул; вăл шанчăклă, хавас;
килет каллех пурăнас та пурăнас.
Пĕлместĕп, вăрăм е кĕске кунçул;
пĕлетĕп, кунçултан лере кун çук.

Çапах та çутă, ăшă эс пуртан,
чун тасалать тем тĕрлĕ юр-пăртан;
кӳретĕн хурçă шанчăк тĕнчене;
эс — тĕрĕслĕх, ытарайми анне.

Эс, тĕрĕслĕх, пыл хурчĕ пек ĕçчен;
пылу пылак та, йӳçĕ те иккен.
Сана, вĕлле хуртне, хĕвел йăхне,
хума пуçланăччĕ çавтер йӳне...

1

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
хĕвел хурчĕ,
çухалать тесе йăху,
чĕрем çунчĕ.

Чĕрем çунчĕ шеллесе,
ĕçĕклерĕ:
«Хисеп çук сире, хуртсем,
халĕ»,— терĕ.

Имçамлаççĕ уйсене,
çунтараççĕ,
гербицид-пестицидне
хыт сапаççĕ.

Е, хăртса çăкалăха,
хыр лартасшăн,
яраплан çинчен тăкать
хими тахăш.

Пĕтĕм улăх-çарана
сухаланă,
кĕтӳ кĕртнĕ вăрмана,
таптаттарнă.

Ёшнере çукрах утар,
çук ăстаçă,
çаратса пур пек утта,
хак ыйтаççĕ.

Çырмари çĕмĕртсене
тапăр янă,
ытарми çăлкуççене
лапăртанă.

Пахчара çĕрулмисем
шăпăрланнă —
колорадо нăррисем
çисе янă.

Хлорофос сапсан, вĕсем
кăшт тамалĕç —
юлмĕç вĕллере хуртсем,
тухса тарĕç.

Тарласан, тар шăршине
юратмаççĕ,
одеколон таврашне
чăтаймаççĕ,

эрех ĕçнĕ çын килсен
тарăхаççĕ,
самолет пек вирхĕнсе
тапăнаççĕ,

ăвă тĕтĕмне кăна
пăхăнаççĕ,
вĕллесем тытакана
пыл параççĕ.

Манӑн ватӑ аттене
туламаççӗ,
юратса каланине
ӑнланаççӗ...

Эп тӑратӑп — тӗкпеле
вӗркӗч тытнӑ:
«Вӑхӑт çитнӗ, илмелле,
вӑхӑт çитнӗ,

пичетленӗ рамкӑсем,
ав, шап-шурӑ,
пӗтӗмпех магазинсем
пылпа тулнӑ».

Пӗçертет ирех хӗвел,
питӗ шӑрӑх.
Тар юхать, кӗрет хӗве
питӗм тӑрӑх.

Шӑрӑхра хурт хирӗçмест
куçӑхмасӑр.
Шӑрӑх — канлӗ ӗçлеме.
Сивӗ — кансӗр..

Усал куç, ан пыр патне —
хурт ӗрчемӗ,
тарӗ вӑл тӗнче хӗрне
чӑтнӑçемӗн.

Усала хурт та сисет,—
ылтӑн кайӑк.
Шуйханать, йӗрет, вӗçет.
Пурччӗ — кайнӑ.

Арăмлатпăр темĕнччен...
Пăхнă питĕ
виç мăнукĕ ват аттен
карта витĕр.

Ҫаснă май карассене
тулчĕ тирĕк.
Тирĕкпех лартса анне
пачĕ. Ҫирĕç.

Пўрнисем чечен тытма —
тытрĕç шăппăн.
Тути çепĕç çулама
йăпăш-йăпăш.

Лантăш пек шап-шур шăлсем
васкамасăр
çыртрĕç техĕмне пĕлсе.
Эх, карасĕ!

Ҫарчĕсем чĕлхе вĕçне
йĕкĕлтеççĕ.
Ачасем хăйсен ĕçне
пит пĕлеççĕ.

Шутласан, çиме те шел.
Ах, илемлĕ!
Тухнă пыл шăршийĕ шеп,
хурт иленнĕ.

Иккĕн пўрт шăплăхĕнче,
ав, вĕçеççĕ.
«Йĕкĕтсем» вĕсен çинчен
куç илмеççĕ.

Сĕтел хушшинчен тухса,
кантăк уçрĕç,
ăшшăн ячĕç кăларса,
алă çупрĕç.

Ват асламăш, ман анне,
çăвăнтарчĕ,
типĕтме аллисене
сĕлкĕ пачĕ.

Вĕлле хурчĕ те чечек —
хӳхĕм тĕрĕ —
çавă алшăлли çинче.
Ҫалăн — чĕрĕ.

Ҫухалмасть-ха сан йăху,
шанчăк — хурçă,
вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
хĕвел хурчĕ...

2

Пĕчĕкчĕ эп. Ҫара пуç.
Ҫара уран. Вĕл-вĕл çӳç.
Ҫытма йĕмпе. Кĕпепе.
Вăй выляттăм кунĕпе.

Вĕлле хурчĕ пахчара
сăхрĕ те, ак, çухăрап.
Ларса юлнă сăннине
илчĕ хăвăртрах анне.

Макăрнăран, чăлантан
ĕнтĕ йывăç чашăкран
йывăç кашăкпа ăсса,
пыл тыттарчĕ васкаса.

Хурчĕ вилчĕ... Хĕрхенсе,
эпĕ тăтăм именсе.
Кӳренмерĕм эп ăна,
ăнсăртран сăхакана.

Сад хушшинче куç тулли
вĕллесем йĕркен-йĕркен.
Хуçисем, ик шур тумли,
аттепе анне иккен.

Шурă çăра тĕтĕмпе
тĕтĕреççĕ паш! та паш!
Хурт мар, ху та пĕтĕмпех
ыйхăлан капла, чăваш.

Ĕçчен чăваш — ĕç упи —
пыл хуртĕнчен кая мар
туртать пурнăç урапи,
çĕрне-кунне уямасть.

Куçăхсан ачи-пăчи,
тĕтĕрет кăмпа чĕртсе.
Вăл пĕлмест — мĕскер-ши чир.
Вăл каять тӳрех вилсе.

Вĕлле хурчĕ те чăваш
мĕн йăванса кайиччен
ĕçлĕç сывă та хавас —
чунĕн тарĕ тухиччен.

Çӳлти ырă вĕсене
панă пысăк вут чĕре.
Хурт пек ĕçлекенсене
вăл сунать çитме çĕре.

Пӗчӗкчӗ эп. Манас çук
пурпӗр, ирттӗр хуть çӗр çул,
тахӑш: «Вӑрçӑ!» — тенине.
«Павӑл!» — çухӑрчӗ анне.

Ӳкрӗ тӗтӗркӗч палтах.
Ак атте пырса йӑтать
ывӑлне, мана, хуллен:
«Сыв пул, ульӑм, ан çиллен...»

3

Пирӗн айӑкра çерем нумайччӗ.
Йӗри-таврара чечек кӑначчӗ.
Сасӑ-нӑрӑлӑш тӑратчӗ хӑлхара.
Пыл шӑрши тӑратчӗ сывлӑшра.

Ҫусӑм çивӗч кусчӗ те, сӑнаттӑм.
Ҫашни утӑмра хуртсем курattӑм:
тӑрӑшса та вӗççӗр нӑйлашса,
пыл пухатчӗç хытӑ васкаса.

Вӑрман айӗнчеччӗ Саврӑшпуçӗ.
Вӑрманта кӑшт сулхӑн, сывлӑш уçӑ,
туллиех хӗвеллӗ ӗшнесем,
кашнинчех рет-ретӗн вӗллесем.

Ҫашнинчех омшаник, утар пӳрчӗ,
ыр утарçӑ, хаяр йытӑ пурччӗ.
Сывлӑмпах вӗçетчӗ ылтӑн хурт,
пылпала хутлатчӗ пин-пин хут.

Ҫайнӑ чух пӑхатӑн та, вӑл çӑмӑл.
Ҫилнӗ чух — тулли лавпа — чӑп-чӑмӑр,
йывӑрпа килсе ӳкет. аран,
йӑванса каять хӑш чух вара.

Хĕвеле, ăшша чунран саваççĕ,
хурт ами пулсан — çура сапаççĕ,
йыш тулсан — тараççĕ вĕллерен.
Хуртăн мыскарийĕ тĕрлĕрен.

Çăвăр вĕçтерет, ак, хĕвел витĕр —
ăрша пек вылять, хаваслă питĕ,
хуртсене савать Микуç мучи,
мучие савать ял ачипчи.

Аттесем-мĕнсем йăлт вăрçăраччĕ
(Аманса килсе, тепре ăсанчĕ,
пулеметчик пулнăскер, атте)...
Юратмасть вăрçа мучи пĕртте.

Граждан вăрçиччен те нимĕç курнă:
«Вăхăт-вăхăт тем пулать-тĕр, урнăн
нимĕç талпăнать Раççеелле
аçтаха пек,— тет вăл,— çĕленле».

Хальхинче мучи вăрçа каймарĕ,
суха турĕ, акрĕ, çывăрмарĕ,
утă çулчĕ, çапрĕ авăнне,
ĕлкĕрчĕ, манмарĕ утарне.

Август уйăх çитнĕччĕ, пыратчĕ
вăрçă хĕрнĕçем хĕрсе, фронтраччĕ
пĕтĕм çамрăк, вăйпитти этем,
кĕреш пек кукка, патвар аттем.

Хăш килтен ик ывăл, хăшĕн — виççĕ
çул хыватчĕç сулăмпа вут витĕр,
вată-хĕтĕ юлнă та яла
кĕлетсем панче ыраш аллать.

Аннепе эп вăрлăх турттаратăп,
акнине пăхса тăрса кулатăп:
ват Микуç, Мирун тыр кунтипе
сар ыраш акаççĕ кунĕпе.

Юнашар Емкке мучи, сунарçă,
Кириле, Ванюк, Ехрем утаççĕ,
пак! паклаттараççĕ чĕлĕмне,
ывăçпа сапаççĕ тыррине.

Шур çӳçли, кукша пуçли те пурччĕ,
пĕр мучи суратчĕ юнлă сурчăк,
тепĕри куратчĕ аран çеç,
пурпĕрех ĕçлетчĕç пикенсех.

Лав акса пĕтсессĕн, иккĕн-виççĕн
кĕç астурĕç: хырăмсем-мĕн выçă,
утарта та пысăк ĕç тăрать —
ушкăнпа уттарчĕç утара.

4

...Пĕчĕк ял йĕри-тавра
вăйлăччĕ улăх-çаран,
кăкăр таран курăкчĕ,
тутăччĕ те тулăхчĕ.

Чечек, чечек тенĕрен,
чечекĕсем тĕрлĕрен:
шуррисем, кĕреннисем,
саррисем, сенкеррисем.

Вырăн-вырăн кăн-кăвак,
вырăн-вырăн хĕрлĕ, ак.
Кам пĕлмест, ăçта чечек —
пин-пин хурт унта вĕçет.

Сархӑват, ҫырла ҫеҫки,
метрӳшке кунта ҫук-и? —
ир пулса мĕн каҫченех
илĕртеҫҫĕ хуртсене.

Хурт килет, хурт ӑсанать
ирхи хĕвел тухсанах,
вӑрман хыҫне аниччен,
чунĕсем килениччен.

Ыр кураҫҫĕ хурчĕсем,
ыр кураҫҫĕ чечексем:
хурт ларан чечек хунать,
чечек пур-тӑк, пыл пулать.

Хуратул уйра шап-шур,
шӑркара ыраш, ав, кур,
пыл кӑна-и, хуртпала
тырӑ-пул та ӑнмалла.

Им те, сип те пылĕнче,
ҫӑкринче-кулачинче —
эп ӑнланнӑ аванах
ҫавсене ачаранах.

Эп ӑнланнӑ: пыл — пылак,
ҫӑкӑр тутлӑ — шур кулач;
ӑнланман ҫавна анчах:
выҫӑ ма мĕнпур ача?

Ма кӑшлать йӳҫ пашалу —
ҫыртрӑн, катӑлчĕ шӑлу.
Хĕлĕ питĕ вӑрӑмччĕ,
атте ҫукчĕ, вӑрҫӑччĕ...

5

Чылайччен атте ҫыру ямарӗ.
«Пӗтрӗ пулӗ»,— терӗҫ. Чун юлмарӗ.
Окопсем чавма ҫӳрет анне
Хусана, таҫти Нурлат енне.

Ҫич вӗллеччӗ, пӑхманран путланчӗҫ,
пӑхаканӗсен шӑпи пӑтранчӑк,
пӗчӗкҫӗ пепки — хӑрас хунав —
сывӑ юлнӑ теплерен кӑна.

Те куҫ ӳкнӗ ӗнтӗ, те хӑранӑ,
те ылханнӑ пӗр усал хӗрарӑм
кураймасӑр темшӗн аннене,
кам пӗлет мана мӗн пулнине.

Утакан ачах утма пӑрахнӑ,
ҫиеймен, кулман ҫур ҫула яхӑн.
Ҫашӑк аврипе шӑл хайӑрса,
панӑ пылак шыв тӑрсан-тӑрсан.

Шур мулла патне вӗртме кайманшӑн
аннене ятлать ялйыш; ку маншӑн
халь те ӑнланма май ҫук камит:
ма — мулла, пачӑшкӑ мар, ами?

Ҫавӑн чух Микуҫ, ак, пырса кӗчӗ:
«Ӗмтерсе пӑхман-и,— терӗ,— чӗчӗ?
«Ӗмӗртӗр-ха пысӑк ачанах,
вӑл вилет ахаллӗн кӑҫалах».

Хамӑн анне мар, ак, кӑкӑр пачӗ.
«Пысӑк анне» тетӗп халӗ. Ячӗ —
Укахви. Халь те пулин ӑна
аннепе пӗр тан эп асӑнап.

Шăммăм-шаккăм çеçчĕ, самайлантăм,
пĕр чипер калаçрăм, пĕр суйлантăм,
акă тăррăс! пусрăм тепринче —
çуркунне, хĕвеллĕ ир çинче.

Çавă кун Микуç мучи те пычĕ.
Пĕлтĕмĕр: старик хавшанă выçă,
йывăç чашăк тытнă хăй çапах,
пыл тултарнă вăл унта чăпах.

Пысăк йывăç кашăкĕ чечеклĕ,
яп-яка та çутă, интереслĕ,
анне касрĕ ăшă çăкăрне,
çирĕмĕр вара мучи пылне.

Пăлтăртан таçтан, уç алăк урлă,
нăрласа хурт вĕçрĕ пултаруллăн,
чаранчĕ те ларчĕ кантăкра,
нăрлами те пулчĕ тыткăнра.

Виççĕн тан ун çинелле пăхатпăр.
Мучие те хушрăм, эпĕ хам та
пулăшрăм уçма чӳречене:
вĕç, пыл хурчĕ, ирĕкре çӳре!

Алă çупрăмăр анне те эпĕ.
Питĕ савăк! Хытă хĕпĕртетпĕр!
Пулчĕ вĕлле хурчĕ хăнара.
Кайрĕ, ак.
Çухалчĕ, ак, куçран.

Виççĕн тан кашăксене çулатпăр,
пыл çисе, виçесĕр савăнатпăр.
Ыталап сухаллă мучие,
чуптăвап. Мучи кулать чее.

«Ҫин,— тет,— ҫак шăхличĕн вăрăм ĕмĕр
пулатех, вилмерĕ, тĕпĕр-тĕпĕр
ҫӳрĕ те тĕнче касса вăрах,
таврăнĕ кайран тăван ялах».

...Тахҫанах куҫ хупнă ырă ватă,
сăмахне паян та астăватăп,
чĕрере усратăп пехилне —
халь те тутанатăп пек пылне.

**6**

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
санăн ăраскалу пур:
пуҫĕпех пĕтме памарĕҫ,
кăтартсан та тем чул хур.

Хурт хуҫи халь — Хурт Мишши.
Хурчĕсем ун ҫĕн йышши —
вăйлă. Кавказран кӳртернĕ;
калăн, сăннисем пĕр шит.

Шприц пек сăвăраҫҫĕ тет.
Вуншар ҫухрăм хурт вĕҫет,
талпиҫен чечекĕнчен те
пыл илме ун вăй ҫитет.

Ăратти хăватлăран
кĕрлесе кăна ларать.
Пур вĕлли те хутлă-хутлă,
сывă, хĕл каҫать аван.

Виҫҫĕртен те иртрĕҫ пек.
Хăй ăсне хурать тĕпе
Хурт Мишши — Микуҫ мăнукĕ,—
туслă манăн аттепе.

Вырӑсла та чӑвашла
хурт ҫинчен атте вулать.
Ҫирлӗ-тӗк, французларан та
куҫарса пама пулать.

Фронт салтакӗ, яра пар!
Ӗмӗр уйрӑлса фронтпа,
утаймасӑр вунпӗр уйӑх
выртрӑн эсӗ вырӑнпа.

Вунпӗр уйӑх витрӳне
йӑтрӑм эп лупас хыҫне,
ма тесессӗн тухаймарӑн
эсӗ ху килкартине.

Вунпӗр уйӑх хурантан,
ҫывӑхне лартса пукан,
эп салма яшки антартӑм,
пултӑр терӗм утакан.

Эсӗ пурӗпӗр пӗртте
ҫӳреймерӗн-ҫке, атте,
шӑлна ҫыртрӑн, чӑтрӑн, чӑтрӑн,
турӑн ман валли тетте.

Ҫасрӑн йывӑҫран, хутран
е сап-сарӑ пушӑтран.
Эх, мӑнтарӑн ҫилҫуначӗ,
вӗрирехчӗ пуль вутран!

«Пӗтрӗм, ульӑм, мӗн тӑвар? —
терӗн эс пӗрре хаяр,—
ӗнтӗ юмӑҫа каяр-и
е пачах л е р е каяр?»

Қаçхине ĕçрен анне
килчĕ те çак аттене
чĕрçине илсе уларĕ,
татăлчĕ мĕн ирчченех.

Шăматкун, ӳке-ӳке,
пысăк йывăç шетнике
хăвăрт вĕри шыв тултарчĕ —
аттене кĕме иккен.

Хунă курăк пĕçерсе.
Кӳртрĕç. Пăхрĕç ĕçтерсе
тĕрлĕрен шĕвек, таблетка —
тем те ĕçĕн чир ерсен.

Хур каяшĕ. Армути.
Шăк, йыт çу тата ытти.
Мĕн ĕçсен те, мĕн çисен те
пулаймарĕ-ха пайти.

Кĕр иртсе хĕле кĕрсен,
утарта ĕçсем пĕтсен,
ват Микуç килсе шаккарĕ —
пирĕн инкеке пĕлсе.

«Илтрĕм: Павăл сывраймасть,
сывраймасть—çын пулаймасть,—
терĕ вăл ăнлантаруллăн,—
хама çеç итле, айван.

Кусăхсассăн, ачана
тĕтĕреççĕ-и, сана
кашни каç хыт тĕтĕрес те
тăлăппа витес кăна.

Тĕтĕмĕ çав хурт кăмпин
ыйăх килтерет вăл пит,
çийĕнчен пылпа алойăн
шĕвекне ĕçсем эппин.

Пылпала алой анчах
чăн вĕрӳç те чăн ăсчах;
хур пустар, ĕç, çи, мăнтарăн.
Шăллăм, ан кулян пачах.

Ирхине вут уççинче
хĕрт, çунтар эс темĕнччен
пилĕкне те, çурăмна та —
çатма пек хĕреличчен.

Вырт вара хыт сак çине,
манса кай тӳшек мĕнне,
тăлăппа пит лайăх витĕн,
ман шăкне те йыт çуне.

Спирт çинче прополис, ак.
Сăтăрттар та ĕç пăртак,
пыл-прополис вăл, ачамккă,
усă кӳрĕ-ха пайтах...»

Хытă тĕлĕнчĕ атте.
Вунпĕр уйăх выртрĕ те,
тек ӳкмерĕ, çук, вилмерĕ,
ĕнтĕ иртрĕ çитмĕлтен.

Тавтапуç сана, мучи,
эпĕ, Павăлăн ачи,
ыр ятна сăвва кĕртетĕп —
эс этемччĕ, чăн-чăн çын.

Çăмăл пултăрччĕ тăпру.
Çĕнĕ çитĕннĕ ăру
сан ятна манса ан кайтăр.
Эпĕр — санăн хатару.

Таймапуç, ăстаç Мишша.
Хурт — пуçлăхсене нуша,
сана мар. Вăл саншăн — юрă.
Çуллен-çул йышне хушан.

Таймапуç, уйсем-хирсем,
вăрмансем те ĕшнесем,
хаклă ялăм, çĕрĕм-шывăм.
Таймапуç, ялйыш, туссем.

Таймапуç сана, ыр кур,
тавтапуç çĕр хут, пин хут,
пархатарлă та мухтавлă
вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт!

## Юлашки çавра

Хурт, тĕрĕслĕх пек эс ĕçчен,
пылу пылак та, йӳçĕ те иккен,
анчах тĕрĕслĕхе, тĕнче чысне,
хума пуçланăччĕ çавтер йӳне.

Қалатчĕç тĕрĕсех сăмахпала,
тăватчĕç ĕçĕпе пач урăхла.
Çапла ялан суйса, муталанса,
тăп чарăннă-мĕн эпĕр, пăнтăхса.

Пӗтмех пуҫланӑ, пурпӗрех хальччен
мухтаннӑ, чӑн-чӑнне калас темен.
Терт куртӑмӑр ҫур тӗреслӗх пуртан,
ҫур тӗреслӗх суяпала пӗр тан.

Ҫур тӗреслӗх ҫынна пӑсса ярать —
тем тыттарма та, тет, вара юрать:
пурте суятчӗҫ — пуҫлӑхсем, туссем...
Ҫӳлтен ҫапла хушатчӗҫ ма тесен.

Чӑнне кала  тееҫҫӗ халь ҫӳлтен,
ӗҫре кала ӑна, кала килте,
кала та  ту ӗҫне каланӑ пек,
тумарӑн-тӑк, вӑл тан — вӑрланипе.

Пур сӑрӑ хурт, пур вӑрӑ хурт тата,
вӑрри пыла кӳршисенчен йӑтать.
Чӑваш нихҫан та сӑрӑ хурт пулман,
вӑрра та чунранах вӑл курайман.

*1986*

# ТУПМАЛЛИ

## САВӐСЕМ


Пултарулӑх . . . . . 3
Пӗччен хурӑн . . . . . 4
Манӑн ӗмӗт . . . . . 5
Вӑрттӑн ҫыру . . . . 6
Аксу шкулне . . . . . 7
Ирхи юрӑ . . . . . . 8
Доярка . . . . . . 9
Пӑру пӑхакана . . . . 10
Юр тасалӑхӗ . . . . 11
Сольвейг . . . . . 12
Суялӑх . . . . . . 13
Ютра . . . . . . 14
Каҫхи ҫилсем . . . . 15
Чӑнлӑх вучӗ . . . . 16
Ман пӗтӗм пурӑнӑҫ . . 18
Ах, эсӗ, пуҫӑм . . . . 20
Юратупа ирӗклӗх . . . 22
Шыв типнӗ ҫул . . . . 31
Тракторострой ҫути . . 32
Рак . . . . . . . 35
Тӗнчесем . . . . . 37
Пӗрскерне . . . . . 38
Чӑваш амӑшӗ . . . . 40
Утсем . . . . . . 41
Тасалӑх . . . . . 42
Аслӑ улӑх паян . . . 44
Пирӗн мар . . . . . 45
Кӗвӗҫ чун . . . . . 46
Кам ирӗкӗ? . . . . . 48
Сыв пул . . . . . . 49
Пурнӑҫ тӑрӑх . . . . 50
Шурӑ кунсем . . . . 52
Ах, уйӑх, уйӑх . . . 53
Уяртрӗ мар-и . . . . 54
Вӗри чӗре . . . . . 55
Ман марри . . . . . 56
Ӳпкевлӗ йӗркесем . . 57
Аса илес мӗне? . . . 59
Сасӑ . . . . . . 60
«Вӑрҫине сирсе ярсан та...» 61
«Ирхи вӑрман...» . . . 62
«Курнах пуль...» . . . . 63
Юрататӑп . . . . . 64
Тӳлек . . . . . . 65
«Эс кун ҫути...» . . . . 66
Пӑлхарӑм, пӑлхар . . . 67
Ҫӗнелетпӗр! . . . . . 68
Ҫурхи ҫумӑр . . . . 70
Чавайн . . . . . . 71
«Ӗнтӗ анӑҫ арки...» . . 73
«Пусараймӗ ӑша лӑпкӑ канӑҫ...» . . . . . 74
«Пуртех пӗтмен-ха, саланман-ха...» . . . . 75
«Мана вӗлерӗҫ хамшӑн мар...» . . . . . 76
«Хӑтар инкекрен халӑха... эй, пуласлӑх...» . . . 77
«Тӗрлӗ пуҫлӑх...» . . . 78
Афган ҫӗрӗнче . . . 79
Хӗвелсем . . . . . 80
Хӗвел аннӑ вӑхӑт . . . 81
Ҫӗр хӑлӑпӗ . . . . 82
Ирхине . . . . . . 84
«Пур ҫӗрте те — суялӑх...» 85
Хӗвелӗм, хӗвел . . . 86


## ПОЭМӐСЕМ


Шанатӑп. Ӗмӗте усратӑп 87
Саврӑш енӗ . . . . 96
Юлашки юмах . . . 107
Юлашки юн тумламӗсем 114
Хӗвел йӑхӗ . . . . . 132

Для старшего школьного возраста

*Михаил Сениэль*
*(Михаил Павлович Егоров)*

**УТРЕННЯЯ ПЕСНЯ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор В. П. Тимаков
Художник В. А. Кузьмина
Худож. редактор М. Д. Давлятшин
Техн. редактор Н. В. Васильева
Корректор Р. К. Игнатьева

ИБ 2417

Сдано в набор 18.09.89. Подписано к печати 24.05.90. НТ 34256. Формат 70×108¹/₃₂. Бумага офс. № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 6,65. Усл. кр.-отт. 6,86. Учетно-изд. л. 5,17. Тираж 3000 экз. Заказ № 2689. Изд. № 64. Цена 35 коп. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина 4, Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

35 пус

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ